Пĕтĕм тĕнчĕри пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 28
ЙУНКУН 224(5037) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. замеçтителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Чăваш парторганизацийĕн облăçри XIX-мĕш конференцийĕ

Бољшевикла йертсе пырассин çĕнтерейми хăвачĕ—массăсемпе тачă çыхăну тытнинче

ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти феврал-мартри Пленумĕнче Сталин йулташ „Партилĕ ĕçĕн çитменлĕхĕсем çинчен, троцкисла тата ытти икĕпитлисене пĕтерес ĕçсем çинчен" историлĕ сăмах тухса каларĕ. Çав сăмахра Сталин йулташ, ытти чи паха кăтартусемпе пĕрле, руководительсем массăсемпе тачă çыхăнса, вĕсен опычĕпе усă курса ĕçлеме кирлине кăтартса хăварчĕ.

Сталин йулташ ун чухне çапла каларĕ:

„Тĕрĕс йертсе пыма пĕр пирĕн опыт, йертсе пыракансен опычĕ кăна çителĕклĕ мар, апла пулсан, хамăрăн опыт, йертсе пыракансен опычĕ çумне массăсен опытне, халăх опытне хушни кирлĕ".

„Массăсемпе çыхăнса тăни, çав çыхăнăва çирĕплетсе пыни, массăсен сассине итлеме хатĕр пулни—акă мĕнре бољшевикла йертсе пырассин вăйĕпе çĕнтерейми хăвачĕ".

Сталин йулташăн çак кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе, чăваш бољшевикĕсем промышлĕннăçра та, йалхуçалăхĕнче те, хуçалăхăн пур отрăçлисенче те пысăк çĕнтерӳсем турĕç.

Анчах Чăваш парторганизацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ çакна кăтартса пачĕ: ПСК(б)П Обкомĕн руководстви Сталин йулташăн çак паха кăтартăвĕсене тивĕçлипе пурнăçласа пыман. Вырăнти организацисене бољшевикла йертсе пырас, оперативлă йертсе пырас, куллен вĕрентсе, пулăшса пырас вырăнне, пуринчен ытла кабинетсенче шăвласа, вĕçĕ-хĕррисĕр ларусем туса, комиççисемпе подкомиççисем туса ĕçленĕ. Çакăн пек йĕрке вăл Халăх Комиссарĕсен Советĕнче кивĕ руководствă ĕçленĕ вăхăтра пулнă.

Конференцинче тухса калакан делегатсем кашни хăйсен сăмахĕсенче ПСК(б)П Обкомĕ массăсенчен, пуçламĕш тата районри организацисенчен айакра тăнине палăртаççĕ. Обком çекретарĕ Дубăв йулташ, конференцинче ПСК(б)П Обкомĕн ĕçĕсем çинчен каласа, хăйĕн докладĕнче лайăх ĕçлекен пĕр пуçламĕш организацине те илсе кăтартма пултараймарĕ. Çакă та ĕнтĕ Обком руководстви пуçламĕш организацисен ĕçĕсемпе пурнăçĕ çинчен пĕлменнине кăтартать.

Массăсен сассине тимлĕн итлесе вĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшманни, вырăнсенчи работниксене оперативлă йертсе пыманни, ытларах кабинетсенче шăвласа ларни, çапла вара партилĕ массăран уйăрăлса кайма пуçлани Обком руководствин пысăк çитменлĕхĕсем патне илсе пынă. Обком руководстви активпа ĕçлемен, унтан хăранă.

Халăх тăшманне Спасăва тĕрĕслесе тăрă шыв çине кăларма хушса районсенчи партконференцисем пĕрре кăна мар постановлени йышăннă пулин те, Матвейĕв, Вастрӳк тăшманĕсем пирки çигналсем пулнă пулин те вĕсене йулашки вăхăтченех тăрă шыв çине кăларманнине тата предатĕл Иванов тăшмансене хӳтĕлесе тăнине пĕлетăркачах ăна çапса сирпĕтменнине тата мĕнпе ăнлантарса пама пулать-ха? Массăсен сасси хыттăн илтĕнне, массăсем тăшман çине тĕллесе кăтартнă, анчах Обком руководстви массăсен сассине итлемен, мĕншĕн тесен вăл массăсенчен айакра тăнă. Çакă пулнă ĕнтĕ Обком бӳровĕн чи пысăк йăнăшĕ.

Ответлă вырăнсене хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандитсене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, руководствăна çĕнĕ çынсем, Ленин-Сталин партийĕшĕн, социалисăмшăн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен бољшевиксем килчĕç. Çак çĕнĕ кадрсене пулăшса, вĕрентсе пырасси Обком бӳровĕн ĕçĕнче пулман. Райкомсен çекретарĕсене пулăшса, вĕрентсе пырассине те пулин Обком бӳровĕ пурнăçа кĕртме пултарайман.

Ĕçре оперативлăх пулманни, конкретлă йертсе пыманни Обкомăн тепĕр пысăк çитменлĕхĕ пулнă. Строительствăри, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри, вăрлăх хуçалăхĕнчи, култура фронтĕнчи тата ытти ĕçсенчи сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешессине халиччене пуçарса йаман. Канашри вакунсем йусакан савăта, Улатăрти гармоњ хапрăкне тата ытти строительствăсене туса пĕтерессе халиччене тăсăлса пырать. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, вăрлăх хуçалăхĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Йĕпреç районĕнче шкул çачисем ура çинче тăрса вĕренни пулнă, Çĕмĕрлере 700 ачана шкулсăр тăратса хăварнă. Финанс ĕçĕнче, суту-илӳ ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай. Çав çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре вырăнти работниксем пулăшу ыйтнă, анчах Обком руководстви вĕсене пулăшас вырăнне лăплантарса ларнă. Халăх тăшманĕ Иванов, ултавлă майпа Обком руководствине кĕрсе ларнăскер, суту-илӳ ĕçне лайăхлатма ыйтсан: „унпа аппаланма манăн вахăт çук", тесе сӳпĕлтетнĕ. Паллах, çак усал предательрен урăххине кĕтмели те пулман.

Обком пайĕсен пуçлăхĕсем нумайрах хутсем çырса ларнă, вырăнсене тухса çӳрессишĕн вĕсемшĕн сайра хутра тумали ĕç пулнă. „Йалхуçалăх пайĕ (пуçлăхĕ Колцов) тата пропагандăпа агитаци пайĕ (пуçлăхĕ Сергейĕв) пуррипе çукки пирĕншĕн туйăнман", теççĕ конференцинче тухса калакан делегатсем. Пичетпе издательствăсен пайĕпе унăн пуçлăхĕ Карташов йулташ пирки те çакнах каламала. Йертсе пыракан парторгăнсен пайĕ, унăн пуçлăхĕ Полтев йулташ партине илме ыйтса панă зайавленисем тата апелјацисем çине чунсăрăн пăхнă. Сорокин, В. Степанăв, Павлăв йулташсен ĕçĕсем 5—7 уйăх хушши Обкомра йăваланса выртаççĕ. Обком директивĕсем районсене 20-шер кун хушши пыраççĕ. Çапла пулнă Обком руководствин „оперативлăхĕ". Паллах, çакăн пек „оперативлăх" кирлĕ пек резултатсем парассине кĕтме çук.

Йертсе пырас ĕçре кадрсем суйласа илме пĕлни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сталин йулташ кадрсене çапла суйласа илме вĕрентет: „пĕремĕш, политикăлă паллăлăх тăрăх, урăхла каласан, политикă тĕлĕшĕнчен шанчăклă-и вĕсем, иккĕмĕш, ĕçлĕ паллăлăх тăрăх, урăхла каласан, çав пĕр-пĕр конкретлă ĕçе йурăхлă-и вĕсем".

Анчах Обком руководстви çак кăтартусене тивĕçлипе пурнăçласа пыраймаң çеç мар, вĕсене пăсса ĕçленĕ. Ирсĕр сутăнчăк Иванăв ответлă вырăнсене хăйĕн „хӳрисене", тăшмансене нумайрах сĕтĕрнĕ, Обком бӳро членĕсем суккăрăн сасăласа ларнă.

Ахалрен мар ĕнтĕ халăх комиссарĕсем, райкомсен çекретарĕсем çулталăкра 4—5 хут улшăнса тăнисем пулнă.

Сăмах та çук, Обкомăн çĕнĕ составĕ çак йăнăшсемпе çитменлĕхсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерĕ. Массăсемпе тачă çыхăну тытса, оперативлă та конкретлă йертсе пырса, чăваш бољшевикĕсене çĕнĕ те пысăк ӳсĕмсем патне илсе пырĕ.

„Бољшевиксем пире грексен мифологин геройне, Антейа, аса илтереççĕ, тесе шутлатăп ĕнĕ. Вĕсем те, Антей пекех, хăйсен амăшĕпе, вĕсене çуратнă, тăрантарса пăхса ӳстерĕнĕ массăсемпе çыхăну тытнипе вăйлă. Вĕсем хăйсен амăшĕпе, халăхпа, çыхăну тытнă чух вĕсен никам çĕнтерейми пулса йулма пур шанчăк та пур.

Çакăнта ĕнтĕ бољшевикла йертсе пырассин çĕнтерейми хăвачĕн çăраççийĕ". (Сталин).

Фашиссен тыткăнĕнчен çăлнă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Испанири фашисла пăлхавçăсем тытса илнĕ „Смидович" пăрахут çинчи команда составĕнчен тăваттă морйака Франко генералăн фашисла тыткăнĕнчен çăлса хăтарнă.

Çентаберĕн 26-мĕшĕнче вăл морйаксем—Попов, Субботин, Оводăв тата Фокин—Франци территорине çитнĕ.

(ТАСС).

КОНФЕРЕНЦИ ДНЕВНИКĔ

Çентаберĕн 26-мĕшĕнчи каçхи лару

Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцин çентаберĕн 26-мĕшĕнче пулнă каçхи ларăвĕнче парти Обкомĕпе ревизи комиççи отчочĕсем тăрăх прени пычĕ.

Малтанах Тăвай райком çекретарĕ ВАÇИЛЙЕВ йулташ сăмах илчĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче парти Обкомĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем çинчен, уйрăмăнах, Обком çекретарĕ пулса ĕçленĕ двурушник Ивановăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕ.

— Иванов та Петров çулĕпех кайнă, вăл буржуалă-националиссене, халăх тăшманĕсене хӳтĕлесе пынă, вĕсемпе йăвăçнă. Спасăв Горькире ĕçленĕ чухнех есерсене хӳтĕленине Иванов аван пĕлсе тăнă. Обком çекретарĕсем Дубăвпа Павлăв йулташсем Ивановăн ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма тăрăшман. Иванов критикăна хĕссе пынине хирĕç кĕрешмен.

Унтан Ваçилйĕв йулташ парти Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ парти вĕренĕвне, уйрăмăнах ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренес ĕçе йĕркелеме парти райкомĕсене пулăшманни çинчен, çак ĕçсене иртерме панă укçа-тенкĕпе усă курманни çинчен каласа пачĕ.

АРЗАМАСЦĔВ йулташ (комсомол Обкомĕ) парти Обкомĕ комсомол организацине начар йертсе пыни пирки чарăнса тăчĕ.

— Парти Обкомĕ комсомол ыйтăвĕсем тăрăх сахал ĕçленĕ, комсомол организацинчи пысăк çитменлĕхсене, тунă йăнăшсене тӳрлетме, комсомол ретĕнчи тăшмансенчен тасалма пулăшман. парти Обкомĕ комсомол Обкомĕн ĕçне тишкĕрмен, комсомол Обкомĕн бӳро ларăвĕсенче ПСК(б)П Обком бӳро членĕсенчен йе Обком пайĕсенче ĕçлекенсенчен нихçан та никам та пулман.

Парти Обкомĕн çĕнĕ составĕн çак йăнăшсене пĕтермеле, комсомол организацине тивĕçлипе йертсе, пулăшса пымала, —терĕ Арзамасцĕв йулташ.

Йулашкинчен вăл комсомолăн халхи вăхăтра тăракан задачĕсем çинчен каларĕ. Вăл парти организацисен комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавне, комсомолăн районри конференцийĕсене иртерме, комсомол билечĕсене улăштарас ĕçе хатĕрленме пулăшма кирли çине кăтартса пачĕ.

— Сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес пирки ĕçлемен, шав çеç нумай пулнă. Парти Обкомĕн йалхуçалăх пайĕ (унăн пуçлăхĕ Колцов) йалхуçалăхĕнче сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес пирки нимĕн те туман, вăл хăйĕн ĕçĕнче пит те йапăх ĕçленĕ. Çавăн пекех парти Обкомĕн инструкторĕсем те кирлĕ пек ĕçлемен, парти ĕçĕсем тăрăх (кандидатсемпе ĕçлес, парти вĕренĕвне йĕркелес ыйтусем тăрăх) районсене тухса çӳремен, — терĕ ВОЛКĂВ йулташ (Турхан).

ВИШНЕВ йулташ (Патăрйел райком çекретарĕ) Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, уйрăмăнах суртлă вăрлăх пайĕн тата вылăх-чĕрлĕх пайĕн киревсĕр ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕ. Кунта сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерме мар, вăл ĕçсене тарăнлатса, малала туса пыни çине кăтартса пачĕ.

Парти Обкомĕн ĕçĕсем пирки вăл çакна каларĕ:

— ПСК(б)П Обкомĕ партин пуçламĕш организацисен пурнăçне пĕлмест, вăл Обком отчотĕнче те аванах курăнчĕ. Дубăв йулташ хăйĕн докладĕнче пуçламĕш организацисен лайăх ĕçĕсем çинчен пĕр тĕслĕх те кăтартса памарĕ. Пирĕн республикăра лайăх ĕçлекен пуçламĕш партиорганизацисем çук мар, пур, анчах вĕсем çинчен парти Обкомĕ, унăн пайĕсем пĕлмеççĕ.

ФИЛИППАВА йулташ (Куславкка р.) Хĕтĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕ вырăнти организацисене пит те йапăх йертсе пынине палăртрĕ, Сутĕç Халăх Комиссариачĕ шкулсене йапăх пулăшни çинчен каларĕ.

— Пирĕн йалта 4 çул ĕнтĕ туллимар вăтам шкул пур. Анчах çак шкул вал̨ли халĕ те çурт туса паман. Пĕр пĕчĕк çуртрах 7 группа 4 класра икĕ сменăпа вĕренет.

Филиппăва йулташ калана хыççăн конференцине Шупашкарти хапрăк-савăтсенчи рабочисем, служащисем тата инженерлă-техниклă работниксем пырса саламларĕç. Вĕсене делегатсем ура çине тăрса, алă çупса кĕтсе илчĕç. Вĕсен йачĕпе саламлă сăмах ЙЕРОШКИН йулташ (автомашинсем йусакан савăтран) тухса каларĕ.

—Сывă пултăр бољшевиксен коммунисла паттăр партийĕ тата унăн Сталинла Тĕпкомĕ!

Пирĕн тăван йуратнă атте, тĕнчери пролетариатăн учителĕпе çулпуçĕ, аслă Сталин сывă пултăр!—тесе пĕтерет вăл хăйĕн сăмахне...

Конференци делегачĕсем ура çине тăрса нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ.

— Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми çирĕп Сталинла блокĕ!—тени илтĕнсен, пурте пĕр харăс урра! кăшкăраççĕ. Музыкă „Интернационал" йурлать.

Делегатсем саламлама пынă стаханăвĕçсене нумайччен алă çупса, ăшă кăмăлпа ăсатрĕç. Кун хыççăн прени малала пычĕ.

ТОЛСТОВ йулташ (Хĕрлĕ Чутай райком çекретарĕ) ПСК(б)П Обком çекретарĕсем парти райкомĕсене пулăшманни, Обком çĕнĕ кадрсемпе ĕçлеменни, вĕсене вĕрентменни çинчен каларĕ.

ÇЕМЕНĂВ йулташ („Чăваш Коммунĕ" хаçат редакторĕ), Обком бӳро членĕ пулнă май, хăйĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинче чарăнса тăчĕ. Уйрăмăнах Ивановăн ирсĕр ĕçĕсемпе тытăклăн кĕрешменнишĕн, халăх тăшманĕсене Спасăва, Матвейĕва, Розанăва тата ыт. те тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе вăхăтра тата çине тăрсах кĕрешменшĕн вăл айăплă пулса тăни çинчен каларĕ. Йулашкинчен вăл Белоруссăв йулташ ун çинчен калани пирки справкă пачĕ.

— Канашра вакунсем йусакан савăтра ĕçленĕ чухне строительствă начал̨никĕ пулса ĕçленĕ Дул̨чин халăх тăшманĕ пулнине епĕ пĕлме пултарайман, унчухне савăтăн никĕсне çеç тунă, епĕ унта нумай ĕçлемен. Дул̨чинпа йулташла çыхăнусем пулман. Саватра ĕçленĕ чухне епĕ пĕр кушеткă, кроват, вешăлкă тата пĕчĕк сĕтел илнĕ. Вĕсемшĕн епĕ укçа тӳленĕ, хама тивĕçлĕ пĕр уйăх ĕç укçине илмен,—терĕ вăл.

Кун хыççăн ÇЕМЕНĂВ (Обком), КОНСТАНТИНĂВ (Елĕк), ЙЕЛМАКОВ (Турхан) йулташсем тухса калаçрĕç.

Йулашкинчен Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ КОНДАКИН йулташ тухса каларĕ. Вăл Чăваш республикĕнче партипе совет тата хуçалăх организацисенче йертсе пырас ĕçре чылай çулсем хушши ларнă халăх тăшманĕсен—буржуалă-националиссен тискер, сăтăрла ĕçĕсем çинчен нумайччен чарăнса тăрса, тĕплĕн каласа пачĕ.

Çакăнпа каçхи лару хупăнчĕ.

Çентаберĕн 27-мĕшĕнчи ирхи лару

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ бољшевикла критикăпа самокритикă анлăн саралнипе иртет. Тухса калакан йулташсем Обкомăн политикăлă йăнăшĕсене хытă критиклени пĕрлех, тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес, партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатас ыйтусене çивĕччĕн лартаççĕ.

Конференцин çентаберĕн 27-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче пренире чи малтан Медникăв йулташ (Йĕпреç) тухса каларĕ. Партин районсенчи пухăвĕсем,—тет вăл,—Обком отчотне итлесе, ăна хытă критиклерĕç, малашне мĕн тумалисене кăтартса пачĕç. Анчах районсенчи пухусем кăтартса хăварнисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен Обком отчотĕнче пĕр сăмах та каламан. Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕпе Çыхăну управленийĕ питĕ начар ĕçлеççĕ. Парти Обкомĕ хăйĕн куллен ĕçĕнче вĕсен ĕçĕсем çине çителĕклĕ çаврăнса пăхман.

Медникăв йулташ Обком парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртать. Райкомсем партине илнĕ йулташсен ĕçĕсене Обком вăхăтра пăхса тухмасть. Пирĕн организаци тăратнă 25 ĕç Обкомра тахçантанпа выртать. Çавăн пекех парти хуçалăхне йĕркелĕ тытса тăрас ĕç те начар-ха. Парти Обкомĕ коммуниссене пĕр районран тепĕр района куçарать, анчах вĕсем учотран тухмаççĕ. Парти Обкомĕ хăй куçаракан коммуниссем малтанхи вырăнта мĕнле йăнăшсем тунине шута илмест, часчасах айăп тунă коммуниссене урăх организацисене куçарса, вĕсен айăплă ĕçне витсе пырать.

Богатырĕв йулташ (Шăхасан) Рабочисемпе Хресченсен Милици работникĕсене хушшинче воспитани ĕçне вăйлатасси, кадрсене суйласа илесси, самокритикăна сарасси çинчен калать.

— Чăваш парторганизацийĕ троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандăсене тăрă шыв çине кăларса, çапса аркатрĕ,—тет Шишкин йулташ (Шупашкар). Тăшмансене çапса аркатни вăл коммуниссен тата партире тăман бољшевиксен революцилĕ сыхăлăхĕ ӳснине кăтартать. Шишкин йулташ Чăваш парторганизацин икĕ йăнăшне палăртать. Тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ чухне парти членĕсем çине формалăла-бӳрократла пăхни пулнă, тӳрĕ ĕçлекен йулташсене партирен кăларнă, вĕсене тăшман йатне панă. Тепĕр йăнăшĕ вăл—тăшмансене нимĕн хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларассине вăйсăрлатни пулать. Вăйсăрлатассине Обком бӳровĕ, чи малтан Иванов пулăшса пынă.

Шишкин йулташ çапла калать: „Парткоплегине партирен кăларнисенчен 240 зайавлени килнĕ, çав зайавленисене тĕплĕн тĕрĕслесе тухсан, 121 çынна партирех хăварнă. Çакă ĕнтĕ райкомсемпе пуçламĕш организацисем коммуниссен кун-çулĕ çине формалла, чунсăрăн пăхнине кăтартса парать". Коммуниссене партирен кăларасси çине уйрăмăнах Çĕмĕрле, Елĕк, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă райкомĕсем çийелтен пăхнă.

Шишкин йулташ Хĕрлĕ Чутай райкомне, унăн çекретарне Толстов йулташа хытă критиклерĕ. Партилĕ-политикăлă ĕçе организацилес вырăнне,—тет вăл,—Хĕрлĕ Чутай райкомĕ йăлтах административлă метăдпа ĕçлес çул çине тăнă. Районта 84 учителе ĕçрен кăларнă, вĕсенчен 50 çынна халăх тăшманĕн йатне панă. Ку районта йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăсса, колхозниксене нимĕн сăлтавсăр колхозран нумай кăлараççĕ, колхоз председателĕсене йĕркесĕр улăштараççĕ. Виçĕ кун хушшинче нумай çынсене суда пани Хĕрлĕ Чутай районĕнче совет саккунне пăсса ĕçлени çинчен калать.

Малала Шишкин йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртесси çинчен калать. Парткоплеги тунă йăнăшсене критиклет.

„Обком çекретарĕсем Дубăвпа Павлăв йулташсем тата бӳро членĕ Н. Çеменăв, бӳро членĕн кандидачĕ Г. Çеменăв йулташсем Ивановпа лайăх пурăнассине пăсас мар тесе, ăна тăрă шыв çине кăларман. З. А. Андрейĕвă йулташ тахçантанпа Чăваш парторганизацинче ĕçлет, анчах вăл тăшмансене тăрă шыв çине кăларассишĕн кĕрешмест",—тесе калать Шишкин.

— Шупашкарти çĕнĕ строительствăра малтанах сăтăрлă ĕçсем пулнă,—тет Виноградăвă йулташ (Шупашкар). Хуларан савăта каймали çула тума ытлăшши укçатенкĕ пĕтерни, ăна халĕ те йĕркелĕ туса çитерменни, бараксене рабочисене пурăнма майсăр туни çакăн çинчен калать те ĕнтĕ. Парти Обкомĕ çĕнĕ строительствăсене йертсе пыман, унта ĕçлекен йулташсем çине çаврăнса та пăхман.

Йухтанăв йулташ (Йетĕрне) çĕнĕ кадрсене ĕçе лартасси, вĕсене вĕрентсе çитĕнтересси çинчен калать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Йетĕрнери çу савăтне йаланах хăйĕн производствăлă пултарулăхĕпе туллин ĕçлемеле тăвас ыйтăва кăларса тăратать.

Парти Йелчĕк райком çекретарĕ Шакăв йулташ Çутĕç халăх комиссариачĕ тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессишĕн çителĕксĕр кĕрешнине палăртать. „Учительсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарни, тума тытăннă шкул çӳрчĕсене вăхăтра туманни, вĕсен пахалăхĕ начарри—çаксем пурте Çутĕç халăх комиссариачĕн пысăк çитменлĕхсем çинчен калаççĕ",—тет Шакăв. Малала вăл Çĕрĕç халăх комиссариачĕ, Обкомăн промышлĕннăçпа транспăрт тата пичет пайĕсем начар ĕçленине палăртса, вĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе Обком бӳровĕн нумай ĕçлемелли кăтартать.

Николайĕв йулташ (комсомол Обкомĕ) комсомол организацинче политикăлă воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе парти Обкомĕ ку таранчен çителĕксĕр ĕçлесе пынине кăтартать. Комсомол организацинче политикăлă-воспитани ĕçне вăйлатма пулăшас тĕлĕшпе Обком партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ ытла та çителĕксĕр ĕçлет,— тет вăл хăйĕн сăмахĕнче.

— Канашри вакунсем йусакан савăтри парторганизацинче 85 коммунист. Анчах парти Обкомĕ савăтăн тата парторганизацин ĕçĕсене пĕлсе тămасть, ăна йертсе пымасть,—тет делегат Иванов йулташ. 1938 çулта пирĕн савăтра парти Обкомĕн пĕр представителĕ те, пĕр инструкторĕ те пулман. Çавăн пек пысăк парторганизацинче Обком инструкторĕсем пулман пулсан, пĕчĕкрех организацисем Обком инструкторĕсене хăçан курĕç-ши? Иванов йулташ партком çекретарĕсем пĕрмайах улшăнса тăни партилĕ воспитани ĕçне вăйлатма чăрмантарнине хăйсен организацинчи примерпа çирĕплетет.

Сомăв йулташ (Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен) республикă хуçалăхлă ĕçсем йĕнĕпе кайа йулса пынине палăртса, партилĕ политикăлă ĕçе хуçалăхла ĕçсенчен уйăрма йураманни çине кăтартать. Вăл уйрăмах пурăнмали çуртсем, коммуналлă хуçалăх строительствисене хăвăртлатас, суту-илӳ ĕçне лайăхлатас, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме государствă панă плана тултарас ыйтусем çинчен калать.

— Петрова тăрă шыв çине кăларнă факт пирĕн парторганизацишĕн пысăк урок пулмала пулнă. Анчах епĕр çак фактран малашнехи ĕçсем вал̨ли политикăла урок туман. Петровăн партине хирĕçле ĕçне палăртсан, коммуниссен районсенчи пухăвĕсенче те сӳтсе йавман, парторганизацине мобилизацилес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туман, тесе калать Лисин йулташ (Улатăр). Лисин йулташ парти Обкомĕн промышлĕннăçпа транспăрт пайĕн заведуйушчийĕ пулнă Пожеданăв йулташ халăх тăшманне Минайĕва пулăшнă факта илсе кăтартать.

Малыгин (Кувакинă), Коротков (Çĕрĕç халăх комиссарĕ) йулташсем йалхуçалăхĕнче тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕçсем мĕнле пыни çинчен каларĕç.

Колцов йулташ (Обком) пренире тухса калакан делегатсем Обкомăн йалхуçалăх пайĕн çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕсем çинчен тĕрĕс каланине, хăйĕн йăнăшĕсене йышăнать.

Желтухин йулташ (Куславкка) парти Обкомĕн ĕçĕсене пачах çителĕксĕр, политикăла çулйĕрне тĕрĕс мар, тесе шутлать. Вăл парти Обкомĕ парти организацине, хуçалăхпа културă строительствине бољшевикла йертсе пыманнине, парти Обкомĕ кадрсене ĕçе часчасах тĕрĕс мар лартнине палăртрĕ. Акă, Куславкка районĕнче МТС директорĕ пулса ĕçленĕ Воробйова, МТС ĕçне пĕтĕмпех йапăхтарса йанă йыççăн, Шупашкар районне çав ĕçех—МТС директорне лартнă. Унта та вăл МТС ĕçне йухăнтарать.

Сарра йулташ (Обком) Ивановăн двурушникле ирсĕр ĕçĕсене, уйрăмăнах вăл мăнаçланса ĕçленине тĕрлĕ примерсемпе кăтартса пачĕ.

Унтан вăл пичет ĕçĕнчи çитменлĕхсем, Верховнăй Советăн хăшпĕр депутачĕсем суйлавçăсем парса хăварнă наказсене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ.

Çакăн хыççăн ирхи лару хупăнчĕ.

Çентаберĕн 27-мĕшĕнчи каçхи лару

Çентаберĕн 27-мĕшĕнче каçхи ларура Обком отчочĕ тăрăх прени пычĕ.

Пренире ХАРИТОНАВ (Çутĕç халăх комиссарĕ), АЛЬУТАВ (Петĕрне), КАПЧИКАВ (Шăмăршă), ФИЛИППАВ (Верховнăй суд), ЙАКАВЛĔВА (Вăрмар), ПАВЛАВ (Обком), ТАРАСКИНА (Комсомол хула комитечĕ), ИВАНОВ (Шупашкар), МЕЦЕНАТАВА (Елĕк), НОВИКАВ (ССРС Верховнăй Совет депутачĕ) йулташсем тухса калаçрĕç.

Каçхи ларура конференцине Шупашкар хулинчи комсомолĕсем пырса саламларĕç.

Йерошкин йулташ сăмахĕ

(Автомобилсем йусакан савăтри слесăр-стаханăвĕç)

Йулташсем—Чăваш парторганизацин облăçри XIX-мĕш конференци делегачĕсем! Шупашкар хулинчи хапрăксемпе савăтсенчи рабочисенчен, инженерсенчен, техниксенчен тата служăщисенчен Сире, Чăваш республикĕнчи чи лайăх бољшевиксене, бољшевикла çулăмлă салам калама ирĕк парăр!

Йулташсем! Чăваш халăхĕнчен ĕлĕк патша чиновникĕсем, жандармсем йепле мăшкăлланине, ăна буржуйсемпе помещиксем йепле експлоатацилĕнине есĕр лайăх пĕлетĕр, çав тискер пурнăçа

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленеççĕ

Пĕтĕм совет çамрăкĕсемпе пĕрлех, орденлă Чăваш республикинчи çамрăксем те ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă куна ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе тата çĕршыв-аннемĕр валли чаплă парнесем хатĕрлесе кĕтсе илеççĕ. Ку чаплă куна Йĕлчĕк районĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕсем те тимлĕн хатĕрленсе кĕтсе тăраççĕ.

Вăрăм Хăвари комсомол пуçламĕш организаци комсомолĕцсемпе комсомолра тăман çамрăксен хушшинче Сталин йăчĕпе тăракан автосавăтри çамрăк стахановĕцсемпе специалиссем чĕнсе каланине тĕпе илсе суйса йăвна хыççăнах, ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă куна кашни комсомолĕц, кашни çамрăк тăван çĕршыв валли парнесем хатĕрлеме пулчĕç. Сысна фермин пуçлăхĕ комсомолкă Ивановă йулташ фермăра ĕçлекенсем хушшинче веттехминимум кружокĕ организацилесе вĕрентсе кăларма, нумай комсомолĕц-çамрăксем ПВХО, ГТО нормисене пама сăмах панă. Комсомолкă Ивановă йулташ халĕ фермăра ĕçлекен хĕрсем хушшинче веттехминимум кружокне организациленĕ, пайанхи куна виçĕ хут заняти туса иртернĕ. Чылай комсомолĕцсемпе çамрăксем ГТО значокĕн çуллахи нормисене, ПВХО тата ворошиловла тĕл перекенсен значокĕсен нормисене панă.

Кушкăри туллимар вăтам шкул çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацинчи комсомолĕцсем кашниех „хорошо"-ран кайа мар отметкăсемпе вĕренсе пыма, вĕренекенсен хушшинче комсомолăн уставĕпе программине вĕренмелли кружок организацилесе çамрăксене комсомол ретне кĕртессипе ĕçлеме обязательствăсем илнĕ. Халĕ ку организаци çамрăксен хушшинче политикăлă массăлă ĕçе, комсомол уставĕпе программине вĕрентес ĕçе анлăн сарса йанă хыççăн 3 çамрăк комсомол ретне кĕнĕ.

Шăмалакри, Аслă Шăхалĕнчи, Аслă Тайапари, „КИМ" колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕсем те ленинла комсомол 20 çул тултарнине лайăх кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Шăмалакри комсомол пуçламĕш организацинчи комсомолĕцсем йалти çамрăксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе калама çук аван туса пыраççĕ. Йалти çамрăксем хушшинче комсомолăн ӳсĕмĕсем çинчен, комсомол 20 çул тултарни çинчен ăнлантарнă хыççăн çак кунсенче 12 çамрăк комсомола кĕнĕ. Организацинчи комсомолĕцсем пурте тенĕ пекех колхоз производствинче активлăн, стахановла ĕçлеççĕ. Халĕ кашни комсомолĕц ПВХО нормисене пама хатĕрленет.

Анчах районра нумай комсомол организацийĕсем ленинла комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленмеççĕ-ха. Патрекелĕнчи „Осоавиахим" колхозри комсомол пуçламĕш организаци иртнĕ çулсенче районра малта пыракан организаци шутланчĕ. Йулашки вăхăтра йалти çамрăксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе туса пырассине те, комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрлессине те, комсомолĕцсене политикăна вĕрентессине те айкине тăратса хăварнă. Ку ĕçсене пуçарса йарас вырăнне, комсорг Филимонăв час-часах ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрет, йĕркесĕр ĕçсем тăвать. ПСÇЛКС Йĕлчĕк райкомĕ çак ĕç çинчен лайăх пĕлет пулсан та нимĕнех те шарламасть-ха.

Кив Ĕйĕçри, Кавалти, Лаш Тайапари, Çĕнĕ Пăвари комсомол пуçламĕш организацийĕсенче те ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес ĕç йапăх тăрать.

Лаш Тайапари комсорг Илйин:— Епĕ тракатăр бригадинче ĕçлетĕп,— тесе комсомолĕцсемпе хутшăнса ĕçлемест. Нумай комсомолĕцсем кунта комсомол пуххи хăçан пулнине, хăçан пулмаллине те пĕлмеççĕ. Йалти çамрăксемпе ĕçлесси чăтма çук кайа йулнă.

Комсомолăн Йĕлчĕк райкомĕ çакăнта асăннă комсомол организацисене тивĕçлипе пулăшу парса ĕçсене йĕркелесе йани кирлех.

Гер. Иванов.

Вĕренĕве кайри вырăна хăвармала мар

Ишекри комсомол комитечĕ 21 комсомолĕца пĕрлештерсе тăрать. Кăçал комсомола 3 çамрăка илнĕ, пăхса тухма панă зайавленисем 3 пур. Ку ĕнтĕ Ишлей районĕнчи колхозсенчи пысăк организацисенчен пĕри. Комсомолĕцсем пурте тенĕ пекех колхоз производствинче ĕçлеççĕ. Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаканнисем те чылай. А. Матвейĕв—8-мĕш бригадăн бригадирĕ. Ку бригадă йалхуçалăх ĕçĕнчи пур ĕçсене те ытти бригадăсенчен малларах тата пахаларахăх туса пынă. Ытти бригадăсенчен малтан государствăна тырă, натурплатă парса татнă.

Н Овчинникăв колхозри лайăх машиновед. Вăл кăçал тырă вырнă чухне жнейкăпа ĕçленĕ. Вăтамăн кашни кун 6-шар гектар вырса плана 150-шар процент тултарнă.

Колхозăн лайăх клуб пур. Унта библиотекă, радио 69 киле радио кĕртнĕ. Çамрăксене вĕренме, хăта культурăлă иртерме пурте çителĕклĕ. Комсомол комитечĕ производствăри ĕçе тивĕçлипе хакланă хушăра вĕренессине кайри вырăна тăратса хăварнă. Вĕренĕве пачах та организацилемен. Комитет çекретарĕ Илйин йулташ ним именмесĕрех:—тӳррипех калас пулать, иртнĕ хĕлле пĕр заняти çеç туса иртернĕ, кăçал çулла пĕр заняти те пулман,—тет. Комсомол Ишлей райкомĕ çакăн пек пысăк организацине те лайăх ĕçлекен пропагандист тупса паман. Политграмăтă кружокĕ халĕ те ĕçлемест.

Колхоз библиотекинче кĕнекесем çителĕклех пур. Комсомолĕцсем кунти кĕнекесемпе усă кураççĕ-и? Кам мĕнле кĕнеке вулать? Çамрăксем пушă вăхăта ăçта тата мĕнле иртереççĕ? Комсомол комитечĕ çак ыйтусемпе интересленмест.

Т. Майарăв.

Парткабинета ĕçлеттермеле

ПСК(б)П Çĕрпӳ райком çумĕнчи парткабинетăн марксисла-ленинла воспитанине вăйлатмашкăн пур майсем те пур. Библиотекăра Маркс, Енгельс, Ленин, Сталин произведенийĕсем чылай. Граждан вăрçин историне, парти историне вĕренме тĕрлĕ материалсем, журналсем, хаçатсем, илемлĕ литература пур.

Иртнĕ вăхăтра парткабинет пуçлăхĕ Çергейĕв йулташ пропагандиссемпе, агитатăрсемпе 2 ернере семинар туса иртеретчĕ. Уйрăм пропагандиссемпе коммуниссене консультаци парасси те аван тăратчĕ.

Çевтăберĕн 20-мĕшĕнче Çергейĕв йулташ пĕр уйăхлăха канма тухса кайрĕ. Ун хыççăн парткабинет ĕçĕ те начарланчĕ.

ПСК(б)П райкомĕ çавна пĕлет пулин те ним те тумасть.


Коммуниссем, сочувствуйушчисем, комсомолĕцсем тата партире тăманнисем пурте ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырласа кăларнă ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне тарăннăн вĕренме хатĕрленнĕ вăхăтра парткабинет хупăнса ларни пĕрре те килĕшмест.

Парткабинетăн ĕçĕ халĕ питĕ нумай. Парти райкомĕпе пĕрле пропагандиссене хатĕрлемеле, коммуниссене, сочувствуйушчисене, комсомолĕцсене тата партире тăман актива, вĕсен пĕлӳлĕхне шута илсе, кружоксене çирĕплетмеле. Пропагандиссем тата вĕренекенсем валли вырăнти материалсем, илемлĕ произведенисем, географи карттисем, диаграмсем, плакатсем хатĕрлемеле.

Пропагандиссем, вĕренекенсем валли çителĕклĕ таран консультаци организацилесси парткабинетăн чи пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Паллах, консультаци ăнланмала пулмала. Çавăнпа ку ответлă ĕçе пурте пултараймаççĕ. ПСК(б)П райкомĕн консультантсене хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухса халех çирĕплетмеле.

Парткабинет хупăнса, питĕрĕнсе лармала мар, ун ĕçне вăйлатмала.

К. Михайлăв.



Вырăссен аслă учонăйĕ тата изобретателĕ Константин Едуардович Циолковский вилни 1938 çулти çентăберĕн 19-мĕшĕнчĕ виçĕ çул çитрĕ. Циолковский—сывлăшра вĕçессипе авиаци теорийĕ тата практики тăрăх çырнă хакла чылай кĕнекесен авторĕ шутланать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Константин Едуардович Циолковский (1933 çулта ӳкерне).

Мажайкин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Пĕри суйать, тепри ĕненет

Ишлей райĕçтăвкомĕн еутуилӳ пайĕн пуçлăхĕ Башкирăв телефон трубкине тытнă. Кăшкăрать:

— Парăр-ха йалпо!... Йалпо-и ку? Ишлейĕнчи йалпо?... Аха. Парăр-ха председателе! Аха... Есĕ? Игле-ха, председатĕл Бардасăв йулташ! Чукунçул тунă çĕрти рабочисем валли продуктă тата ытти кирлĕ таварсем тăратас ĕç мĕнле пырать сан? Аха... Аван пырать. Ларйок лайăх ĕçлет, тетĕн? Жалăбăсем çук. Йурать. Молодец!

Трубкăна хурать пуçлăх. Умĕнчи хут çине темĕскерле паллăсем тăвать. Ку паллăсем ахальтен çеç тунă паллăсем мар. Весем ăна райĕçтăвком ларăвĕ умĕнче отчот тунă чухне калама çук кирлĕ пулма пултараççĕ.

Каллех телефон трубкине хăлха çумне çыпăçтарать Башкирăв. Вĕрсе уçăлтарать. Кăшкăрать:

— Парăр мана Катраç! Аха... Катраç-и ку? Парăр мана йалпо! Аха... Йалпо-и ку? Председатĕл пур-и? Пур. Есĕ?... Игле-ха, Лебедĕв йулташ! Чукунçул çинчи рабочисем валли продуктă тата ытти кирлĕ таварсем тăратас ĕç мĕнле пырать санăн? Аван. Ларйок лайăх ĕçлет.. Столовăй та лайăх ĕçлет, тетĕн. Йурать. Молодец!

Трубкăна хурать Башкирăв. Умĕнчи хут çине каллех паллăсем тăвать. Отчот тума кирлĕ!

Çапла иртет ĕçлĕ кун. Телефон умĕнче ларса иртет. Телефон тăрăх панă сводкăсене чĕререн ĕненет Башкирăв. Лебедĕв ĕнентерет ăна. Бардасăв ĕнентерет...

„Ларйок лайăх ĕçлет", тет Бардасăв. Акă унăн чукунçул çинчи 5-мĕш участкăри ларйокĕ. Ку ларйокра Савелйĕв тенĕскер прикашчĕк пулса ĕçлет. Тĕрĕссипе—ĕçлемест вăл, кунĕн-çĕрĕн ĕçет. Рабочисем валли килнĕ 295 метр пусма-тавара пĕтĕмпех хăйне валли илнĕ. Сак киревсĕр ĕç çинчен строительствă начальникĕ Бардасăва çийĕнчех пĕлтернĕ.

— Мĕн тумалла?—тенĕ.

— Выгăвăр пар,—тенĕ Бардасăв.

Растратчике выгăвăр панă начальник. Растратчик çиленнĕ.

— Астăвăр-ха, ку выгăвăршăн ахаль каçармастăп,—тенĕ вăл.—Икшер кун ларйока уçмасăр тăратăп. Ун чухне пĕлĕр вара манпала мĕнле калаçмаллине.

Найăссăр çын хăйĕн шухăшне ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ. Çентăберĕн 21, 22, 23-мĕшĕсенче вăл виçĕ кун хушши ларйока хупă тăратнă. Рабочисен вара çăкăр-тăваршăн, махоркăшăн та Ишлейри магазинсене кайса çур кун иртерме тĕл килнĕ.

Çаксене пурне те Бардасăв лайăх пĕлет. Пĕле тăркачах „ларйок лайăх ĕçлет" тесе суйса ĕнентерет. „Молодец" йат илет.

Акă тата Лебедĕв. Ку вара тата ытларах суйма йуратать. Сăмаха суйса каласси унщăн кулленхи ĕçри тĕп задачи пулса тăрать пулас. Мĕншĕн суйатăн тесессĕн, çапла ответ парать вăл:

— Ĕненекен пур чухне мĕншĕн суйас мар!

Чăнласах та ĕненекен пур çав. Чукунçул çинчи рабочисем валли килнĕ пусма-таварсене Хыркасси йалне кайса çăмартапа улăштарса килет Лебедĕв. Башкирăв патне телефон тăрăх отчот парать: рабочисене сутрăм, тет. Суйать. Башкирăв ĕненет. Рабочисен столовăйĕ валли çăкăр мĕн чухлĕ кирлĕ—çавăн чухлĕ парать пекарня. Анчах столовăй илмест. Рабочисем бараксене илсе кайма тесе çăкăр ыйтаççĕ. Столовăй памасть. Сутлăх ытлашши çук, столовăйра çимелĕх çеç, тет. Çакна пĕле тăркачах „столовăй лайăх ĕçлет" тесе Башкирăв патне телефон тăрăх отчот парать Лебедĕв. Намăса пĕлмесĕр суйать. Башкирăв ĕненет.

Хăçанччен çакнашкал суйса пурăнĕç-ши Бардасăвпа Лебедĕв? Хăçанччен çакнашкал ĕненсе пурăнĕ-ши вĕсене пуçлăх Башкирăв?!

П. Ламанас.

Малтанхи ăнăçлăха чакармала мар

Шупашкар хулинчи килхуçи хĕрарăмсем хушшинче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома иртнĕ çулхи зайомран 7 пин тенкĕлĕх ытларах сарнă. Хулари чылай хĕрарăмсем зайом укçине пĕтĕмĕшпех тӳлесе татса облигацисене алла илнĕ те ĕнтĕ.

Чылай хĕрарăмсем-активискăсем зайом укçи пухас йĕнĕпе те лайăх ĕçлеççĕ. Чувашскайа урамра (уполномоченнăй Григорйĕвă й.) зайома çырăнна шутран 46,7 процент, Калинин урамĕнче (уполномоченнăй Мочалов) 50 процент, Нагорнайа урамĕнче (Поляковă) 63,3 процент, Володарский урамĕнче (Прийателĕв) 60,1 процент укçа пухнă.

Çав хушăрах начар ĕçлекен уполномоченнăйсем те пур. Йармăрăчнайа (уполномоченнăй Никитин) тата Трубнăй овраг (Йакăвлевă) урамĕсенчи килхуçи хĕрарăмсем хушшинче зайом укçи пухма тытăнман та. Слесарнай овраг, Урицкий, Ленин, Свердлов Пионер, Плеханăв урамĕсенчи комитетсен уполномоченнăйĕсем те зайом укçине тивĕçлипе пухса пымаççĕ.

Зайома çырăнасси хула ĕççыннисем хушшинче ăнăçлă иртрĕ. Укçа пухас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлени çук-ха. Урам комитечĕсенчи уполномоченнăйсен зайом укçи пухассине лайăхрах ĕçлемеле.

Е. Филиппăв.

Çителĕксĕр ĕçлеççĕ

Хучаш йалсоветĕнче (Йетĕрне р.) виççĕмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухмалли плана 35 процент анчах тултарнă. Ĕç çакăн пек пыни йалсенче массăлă-ăнлантару ĕçĕ çителĕксĕрринчен килнĕ. План тулассин хăрушлăх умĕнче. Апла пулин те çине тăрса ĕçлени курăнмасть-ха. Налог агенчĕ И. Золин й. хăй ĕçне питĕ çийелтен туса пынă. Колхозниксен пухăвĕсенче укçа-тенкĕ пухас ыйтăва вихăçан та тапратмаççĕ.

Г. В.

Чемберлен правительствин тулашри политики

Англи правительстви, малтан та фашисла çĕршывсен хутне кĕнĕскер, влаçа Чемберлен правительстви кĕрсе ларнă хыççăн, фашисла çĕршывсене уççăнах пулăшма, çав кушăрах мир ĕçне чармантарса пыма тытăнчĕ. Акă, нумай тĕслĕхсенчен хăшпĕрисем.

1931 çулта Йапони Маньчжурийĕ тытса илчĕ. Ун чухне Йапоние хирĕç тăма май та пулнă. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем Йапоние çăварлăхласшăн пулнă. Анчах Англи килĕшмени мĕнпур ĕçе хупласа хучĕ.

1935 çулта Итали фашисăмĕ Абиссинине хирĕç вăрçă пуçласа йачĕ. Лигă наци Италине вăрçă пуçласа йаракан çĕршыв тесе каларĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл хăйĕн членĕсене Италине вăрçă хатĕрĕсем сутмала мар тума хушрĕ. Анчах Англи хĕсипе Лигă наци хăй йышăннă решенийе пурнăçа кĕртмерĕ. Кайарахпа Англи Италие каварлаша пуçларĕ. Унтан та ытларах, Англи правительстви кăçал 1938 çулта, Лигă наци çĕççийĕнче Итали Абиссини çĕршывне тытса илнине йышăнма сĕнчĕ.

1936 çулта Германипе Итали фашисĕсем Испани халăхне хирĕç вăрçă пуçласа йачĕç. Испанире икĕ çул ытла ĕнтĕ йунлă вăрçă пырать. Мирлĕ халăх йунĕ шыв пек йухнăшăн пысăк айăпе Англи правительстви çине ӳкет. Мĕншĕн тесен вăл йут çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ фашиссене хирĕç тăрас тĕлĕшпе мĕн те пулин тăвас вырăнне Испани республикине алă-урапан çыхса лартрĕ. Хăйсен столицинче —Лондăнра Испани ĕçне „хутшăнмала мар" текен комитет организацилерĕ. Çав комитет халăхсене улталамалли хĕçпăшал, фашисла государствăсен йунлă ĕçне витсе тăмали пĕркенчĕк пулса тăчĕ.

Унтан та ытларах, кăçал Англи правительстви фашисла Италипе килĕшӳ туса хучĕ. Çав килĕшӳ тăрăх вăл Испани республикине хăвăртрах пăвса пăрахас тискерĕçре Итали фашисăмне пулăшма пулчĕ. Анчах Испани паттăр халăхĕ, фашисла интервентсене хирĕç пыракан хайар çапăçура пиçĕнĕскер, Англи планне ӳппĕн çавăрса çапрĕ.

1937 çулта Йапони Китай çĕрĕ çине тапăнса кĕчĕ. Миршĕн тăракан ытти патшалăхсемпе пĕрле вăрçă вутне сӳнтерсе лартас вырăнне Англи правительстви Йапоние ӳкĕтлеме тытăнчĕ. Паллах, Йапони империалисăмĕ ӳкĕте кĕмерĕ, кĕме те шутламасть. Урнă ытта ӳкĕте кĕртме çукки пурне те паллă. Унтан та ытларах, Англи Йапони войенщинине мĕнпур майсемпе—укçапа та, вăрçă хатĕрĕсемпе те пулăшать, Йапони правительствипе вăрттăн каварлашу тăвать. Англи мĕн чухлĕ ытларах çӳç майлă шăлать, Йапони çавăн чухлĕ ытларах шăртланать.

Кăçал, 1938 çулта, Германи фашисăмĕ пĕр самантра Австрине тытса илчĕ. Ку каллех Англи правительстви пиллевипе пулса тăчĕ. Австрине тытса илес умĕн Германин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп Лондăнра правительствă пуçлăхĕсемпе калаçса ларнă. Калаçу Австри çинчен пынă. Англи правительстви фашисла Германин шут хутне хура ĕçе пиллерĕ. Çав хыпара илсенех Германи çарĕсем Австрине тĕшĕрсе кĕнĕ.

Йулашкинчен, Чехословакири ĕçсем. Германи фашисăмĕ Австрине тытса илсен Йевропăра вăрçă хăрушлăхĕ тата та ытларах вăйланчĕ, вăл чи малтан Чехословаки çине капланса килчĕ. Германи Чехословакине тытса илме шут тытрĕ. Анчах Чехословаки правительстви тивĕçлĕ мерăсем йышăнчĕ, Чехословаки халăхĕ ура çине сиксе тăчĕ. Тепĕр йенчен, Франци Чехословакине пулăшма сăмах пачĕ. Çакă вăл Германи фашисăмне вăхăтлăха кăштах кайала чакнарчĕ.

Англи правительстви мĕн тăвать? Вăл малтанхи кунсенчех фашисла Германи йенне кайса ӳкрĕ. Март уйăхĕнче Англи правительствин пуçлăхĕ Чемберлен парламентра каланă сăмахра çивĕч ыйтусене хирĕç „çук" тесе ответ пачĕ. Чехословаки çине фашисла Германи тапăнса кĕрсен, Англи Чехословакине пулăшĕ-и? тенĕ ыйтăва хирĕç Чемберлен „çук, пулăшас çук" тесе ответ пачĕ. Франци Чехословакине пулăшма тытăнсан, Англи Франци хутне кĕрĕ-и? тенĕ ыйтăва хирĕç Чемберлен каллех „çук, хута кĕрес çук" тесе ответ пачĕ. Çавăн пекех вăл, Чемберлен, Совет Союзĕ миршĕн тăракан çĕршывсен конференцине пухма панă сĕнĕве те йышăнмарĕ.

Унтан та ытларах, Англи правительстви Франципе пĕрле Чехословаки правительствине хĕсĕнĕçемĕн хĕссе пычĕ, халĕ те çаплах хĕсет. Çав тĕллевпе вăл хăйĕн представительне Ренсимена Чехословакине кăларса йачĕ. Çапла вăл, ытти [illegible] ствин ĕçне сĕмсĕррĕн хутшăнать, Чехословакине пулăшас майпа мар, фашисла Германине вăрăхурахла ĕç тума пулăшас майпа хутшăнать.

Халĕ, çак йулашки кунсенче, Чехословакири фашиссем—Германи фашисăмĕн агенчĕсем пăлхав пуçласа йама хăтланнă вăхăтра, Англи правительствин пуçлăхĕ Чемберлен Германие Гитлĕр патне вĕççе кайса килчĕ. Ку ĕнтĕ ӳрăх ниме те мар, фашисла Германипе килĕшӳ тума васканине çеç пĕлтерет.

Вăл чăн та çапла, Англин чăнчăн туртăмĕ Германи фашисăмĕпе килĕшӳ, каварлашу тума тăрăшнинче пулать. Çак çулти апрел уйăхĕнче Лондăнра Англипе Франци министрĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çав канашлура Чемберлен хальхи Чехословаки, вăл „искусствалă государствă" тесе каларĕ. Ку ĕнтĕ ахаль чĕлхепе каласан „Чехословаки пулмала мар" тенине пĕлтерет. Англи консерватăрĕсен оргăнĕ—„Таймс" хаçат çентăберĕн 7-мĕшĕнче тӳрех çапла çырать: „Йут çĕршыв халăхĕ пурнакан территорине Чехословакин урăхисене татса памала". Урăхла каласан, Судет облăçне Германие татса памала тесе ăнланмала. Мĕн каласси пур, ыйтăва пит те уççăн лартнă.

„Таймс" хаçат ăнсăртран мар çапла çырнă. Чемберлен Гитлĕр патĕнче пулса каланă чух Судет облăçне Чехословакирен татса илсе Германие пама пулнă. Чемберлен Гитлĕр патĕнчен таврăнсан Лондăнра каллех, Англипе Франци министрĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çав канашлу Чехословакине касса вăклассп çинчен [illegible] калаçнă, Судет облăçне Германие [illegible] нă. Сăмах майĕпе çакна каласа хăвармала: Франци правительстви пĕрмайах Англи хыççăн суккăрăн пынă, пырать те.

Çапла ĕнтĕ, Австрине Чемберлен Германие сутса йачĕ. Халĕ вăл Чехословакине сутма хатĕрленет. Вăл чăн та çаплах, Фашисăм майлисем тепĕр чухне пуçрăмĕн пуррине персе йараççĕ. 1937 çулта „Раунд тейбл" журналта „Германская проблема" йатлă статйа пичетленсе тухнă. Автăр çырать: „Германи хăйĕн таимарлăхне пĕтерес ĕçре чăннипе Великобритани çине çеç тайанма пултарнă", тет.

Фашисла çĕршывсем вăрçă вутне чĕртсе пыни Англине питех те хытă пырса çапăнать, урăхла каласан, Англине хирĕç вăрçăпа тухас хăрушлăх вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Апла пулсан, мĕншĕн-ха Англи фашисла çĕршывсемпе каварлашма тăрăшать?

Акă мĕншĕн.

Англире влаç рабочисемпе хресченсен аллинче мар, шултра капиталиссен аллинче. Халиччен хи премйер-министр Болдуин çулталăкне 10—15 мĕлйун тенкĕ услам илекен капиталис. Чемберленсен йăхĕ те çавах. Хальхи премйер-министр Невиль Чемберлен „Имперский химический трест" йатлă концернăн акционерĕ пулса тăрать. Паллах, вĕсем халăх фрончĕн çулĕпе пыма пултараймаççĕ, халăх йухăмĕнчен темрен хăрана пекех хăраççĕ.

Ку пĕр йенчен. Тепĕр йенчен, Англин пĕтĕм тĕнчипе колонисем сарăлса выртаççĕ. Фашисла Германи çав колонисем çине куç хывать. [illegible] илмесĕр тăма пултараймаççĕ. Вĕсем хăрушлăха хăйсем çинчен айаккала сирсе йарасшăн. Хăйсен интересĕсене упраса хăварас майпа вĕсем ытти государствăсене, вăйсăррисене, пĕтерсе хума та хатĕр.

„Кашкăрĕсем те тутă пулччăр, сурăхĕсем те вă катăлччăр" текен принципна ĕçлеççĕ. Урăхла каласан, Германи фашисăмĕ те колониллĕ пултăр, Англин те колонисен тĕкĕнмесĕр йулччăр. Çавна Англи капиталисĕ Стӳарт Сандмен 1933 çулти февралĕн 27-мĕшĕнче питĕ уççăн каласа панă: „Пĕр йенчен, Йапони тĕнчен пĕр пайĕнче йĕрке кӳме хăйулăн тытăннăшăн хытă савăнатăп, тепĕр йенчен, пĕр-авăр ĕçĕ патне çитсен Йапоние шутсăр курайманстăп". Ку ĕнтĕ Йапони Китайа хирĕç вăрçă пуçласа йарăшăн савăнатăп, анчах Йапони пирĕ, Англи капиталисĕсене, хĕсме тытăнсан, Йапоние çисе йарас килет тенине пĕлтерет.

Францин „Ордр" йатлă хаçатĕнче Англи правительствин тулашри политики çинчен статйа пичетленсе тухнă. Çав статйа пĕркенчĕке уçса, Англин чăн-чăн сăпатне кăтартса парать. Асăннă хаçат çырнă тăрăх, Англи Италипе, унтан Германипе килĕшӳ тума, çапла вара Франципе пĕр пĕччене тăратса хăварма тăрăшать. Йулашкинчен, фашисла урнă йытăсене Совет Союзне хирĕç вăслаттарса йама шутлать.

Англи, унпа пĕрле Франци те вут-кăварпа выляççĕ. Анчах вут-кăварпа выляни лайăххи патне илсе пымани пуриншĕн те паллă.

П. ИВАНОВ.

Авторитет хыççăн чупса

Темиçе çул кăйарах чукунçул строитĕлствин Тĕп управленине пĕр, хăйне планлас ĕçре специалист текен Петр Баťков пынă. Те алли çăмăл пулнăран, те урăх майсемпе, вăл Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн системинче ĕçлеме йулнă. Иртнĕ çулта çуркунне ăна Канаш-Шупашкар чукунçул строитĕлствине йараççĕ. Кĕске срукрах Баťков, пире паллă мар майсемпех, йунĕ авторитет илет. Хăйĕн „пысăк“ пултарулăхне кăтартас тĕлĕшпе „анлă ĕçсем“ тума тытăнаť. Чи малтанах вăл управленинчи работниксем хушшинчи „ĕçсене“ йĕркелеме тытăнаť. Баťков служăщисен 6 сехетлĕ ĕçкунĕпе килĕшмест, ĕçкунне (вăхăтлăха) 8 сехете çитересси çинчен приказ пройекчĕ çыраť. Строитĕлствă начаљникĕ ăна-кăна шутласа тăмасăрах приказа алă пусса çирĕплетет.

Тепĕр темиçе уйăхран Баťков пуçарнипе çырнă приказ темиçе пин тенкĕ ытлашши расхут панă. Строитĕлствăн саккун тăрăх инженерлă-техникăлă работниксене, служăщисене сверхурочнăй тӳлемеле пулнă. Ку вăхăтра вара Баťков хăйĕн кресли çинче малашне тата çĕнĕ утăмсем тума шутласа ларнă.

Баťковăн малашнехи ĕçĕсем—унта-кунта командировкăсене çӳрени. Анчах строитĕлствă управленинчи пĕр работник те, строитĕлствă та Баťков командировкинчен пĕр грам та усă илмен. Управленин укçа йăшчĕкĕ çеç пушаннă.

Кăçал вара Баťков тата та тимлĕрех „утăмсем“ тума пуçларĕ. Тимлĕрех пулчĕ те прораб пулса ĕçлеме авторитет илчĕ. Çакăнтан унăн „авторитечĕ“ хăвăрттăн малала кайма пуçларĕ. Баťков та „авторитет“ хыççăн чупма тытăнчĕ.

Строитĕлствă руководителĕсем умĕнче Баťков хăйне пултарулă, хастарлă çын пек кăтартма тăрăшрĕ. Лини çинчи пурăнмали çуртсене пурне те çенťабĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме сăмах параť. Вăхăт иртрĕ. Мĕнле тетĕр есĕр? Баťков сăмахĕсем сăмахпах йулчĕç. Çенťабĕрĕн 25-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 26,3 процент çеç тултарнă. Çитменни çине Баťков йертсе пыракан участокăн ĕçĕсем йалан тĕлсĕр пулса вĕçленеççĕ. Баťков пĕр уйăх хушши кантур организацилерĕ, урăхла калаçан, кантур валљи çурт шырарĕ, аппарат пухрĕ. Çакна тунă хыççăн çеç вара строиматериалсем шырама пуçларĕç.

Пурăнмали çуртсем тăвакан кантурăн руководителĕсем Баťков кăмăлне кура ... стахановец-каменщиксен Куçмин бригадине салатса йачĕç. Бригадăна салатса йани те çитмест-ха. Баťков рабочисемпе расчот тăвассине вăрăма чăснă. Халĕ рабочисем 19 кун ĕçлеменшĕн укçа шыраççĕ.

Стахановла çирĕмкунлăх хĕрсе пынă вăхăтра Баťков хăйĕн йуратнă ĕçне „тума“ тытăнаť. Баťков рабочисем патĕнче пулма вăхăт тупаймасť, анчах унăн ĕçкĕ-çикĕ тума вăхăт нумай. Апла тума вăл вăхăт та, майсем те тупаť. Çенťабĕрĕн 22-мĕшĕнче Баťков строитĕлствă управлени начаљникĕн заместителĕпе Стешовпа пĕрле Росснабсбытăн Канашри базинчен строитĕлствă материалĕсем илессине организациленĕ. Çавăн пек, хăйсем калашле, ответлă ĕçе „организациленĕ“ хыççăн Баťков пĕтĕмпех тăнран тухнă. Стешовĕ, те ӳт-пĕвĕ тĕреклĕрех пулнипе, çур ăстăнне ытларах çеç çухатнă. Çапла Баťковпа Стешов иккĕш ӳсĕр пуçпа 5-мĕш участокри рабочисем патне персе çитнĕ.

Рабочисем хăйсем начаљник пыни чылай ыйтусене татса пама май парĕ тесе шутлани ахалех пулчĕ. Вĕсем Баťковăн Стешова хирĕç чĕтренсе тухакан сăмахĕсене çеç илтрĕç. Баťков хăйĕн йулташĕпе йатлаçнине илтсен çын чăтса тăрас çук. Сăмах хыççăн сăмах сирпĕнет Баťков çăварĕнчен, вырăнтан вырăна авкаланса пусаççĕ Баťковăн урисем.

Баťковăн ӳсĕр сăн-сăпачĕ çине пăхнипе, унăн киревсĕр сăмахĕсене чăтаймасăр рабочисем ĕçрен пăрахса кайрĕç.

Епĕр Баťковăн „пултарулăхĕн“ пур пайĕсем çинчен те çырмастпăр. Асăннă фактсем те Баťковăн сăн-сăпатне лайăх кăтартса параççĕ. Баťков авторитет хыççăн чупни мĕн патне илсе пыни те паллă.

Анчах строитĕлствă начаљникĕнчен ыйтас килет: хăçан пĕтĕç-ши „специалист“ Баťковăн утăмĕсем? Ие вăл малашне тата та чĕчекленме пултарĕ-и?

М. Чернов.

Планпа производствă пайĕн инженерĕ.

Газогенератăрлă автомобил

Йулашки çулсенче пирĕн çĕршывра газогенератăрлă автомобил çине питĕ хытă çавăрăнса пăхма пуçларĕç. Парти, правитĕлствă тата Сталин йулташ хăй автотранспăртри çак çĕнĕ машинăна халăх хуçалăхне кĕртес йенпе хытă тăрăшаççĕ. 1938 çул пуçламĕшĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ газогенератăрлă автомобилсемпе трактăрсене массăлă производствăпа кăларасси çинчен йатарласа постановлени йышăннă. Нумай пулмасť пĕтĕм çĕршыв газогенератăрлă автомобилсен пысăк чупăвĕ хыççăн сăнаса тăчĕ. Вăл чупăва çĕнĕ машинăсене сăнаса пĕлес тата вĕсене Совет Сойузĕнчи халăхсен сарлака сийĕсене кăтартас шутпа туса иртернĕ.

Мĕншĕн-ха газогенератăрлă автомобил çине çавăн пек хытă çаврăнса пăхаççĕ? Мĕнле машинă вăл газогенератăрлă автомобил тени?

Нефť запасĕ йенĕпе Совет Сойузĕ тĕнчере пĕррĕмĕш вырăн йышăнаť. Пирĕн çĕршыв питĕ аслă, анчах нефť запасĕсем пуринчен ытла çĕршывăн кăнтăрĕнче—Бакура, Грознайра, Каçпи тинĕсĕн хĕвелтухăçĕри сыранĕнче нумай вырăн йышăнаççĕ.

Сталинла икĕ пилĕкçуллăхсем хыççăн автомобилсем тăвас промышлĕннăç вăйлăн ӳсрĕ. Пирĕн çĕршывăн чи айакри вырăнĕсенче те халљхи вăхăтра темиçешер пин автомобилсем ĕçлеççĕ. Темиçе мĕлйун тоннă бензина час часах нумай пин километр инçене турттарса кайма тивет. Çакăн пек турттарни—бензинăн хакне чылай ӳстерет, чукунçул транспăрчĕ валљи ытлашши ĕç тăваť тата цистернăсем те (баксем) кайала пушăлла каяççĕ.

Çавăнпа та автотранспăрт валљи вырăнти топливăпа усă курас проблемă—ӳссе пыракан социалисăмлă хуçалăхăн питех те пысăк економикăлă проблеми пулса тăраť.

Газогенератăрлă автомобил çав проблемăна татса параť те ĕнтĕ. Бензин вырăнне вăл—вăрман вуттипе, çĕркăмрăкĕпе, пресласа хытарнă улăмпа, чăрăш йĕкелĕсемпе тата вырăнти тĕрлĕрен йышши хытă топливăпа ĕçлет.

Газогенератăрлă автомобиле мĕнле тунă тата ăна мĕнле хускатса ĕçе йараççĕ?

Газогенератăрлă автомобил ахаљ йышши автомобилрен ун çинче хушса тунă çĕнĕ аппаратурă пуррипе уйрăлса тăраť. Вăл—хытă топливăран газ тăвакан газогенератăртан тăраť. Газогенератăра пула ĕçлет те ĕнтĕ автомобил двигателĕ.

Газогенератăр вăл—çын çӳллĕшлĕ цилиндр. Унăн çӳлти пайне бункер теççĕ. Кунта, йатарласа тунă љук урлă топливă хураççĕ. Айалти пайне, топливник йатлăскерне, вутăсем хурас умĕн кăштах йывăç кăмрăкĕ хураççĕ. Топливă хунă хыççăн газогенератăр установкине хытă хупса лартаççĕ. Вара, газогенератăрăн айал пайĕнчи, кăмрăк патĕнчи пысăк мар шăтăка çунакан факел кĕртсе лартаççĕ те топливăна чĕртсе йамалли вентилљатăра тапратса йараççĕ. Вентилљатăр топливăна çунма сывлăш парса тăраť. Кăмрăк хăвăрт çунма пуçлаť. Йывăç тата кĕсен айалти сийĕ те, кăмрăкпа сыпçăнса тăраканскер, çунма пуçлаť.

Топливă çунма пуçланипе, топливникри температурă 1.300 градуса çитет. Кунта йывăçран генератăрлă газ пулаť. Вара çак газ автомобил çинчи охладителсене тата очистителсене кĕрет. Кунта генератăрлă газ кăмрăк тусанĕн, кĕлĕн тата ытти вак пайĕсенчен хăтăлса тасаланаť, сивĕнет, вара трубасем тăрăх двигател патĕнчи смесител текен уйрăма вырнаçаť. Сакăнта вăл сывлăшпа хутшăнаť те, çунакан газ-сывлăш хутăшĕ пулса двигател ăшне кайаť. Çак хутăш, бензинпа ĕçлекен автомобилсенчи бензин-сывлăш хутăшĕ пекех, цилиндрсенче çунса двигателе ĕçлеттерме пуçлаť. Газогенератăрлă автомобил двигателĕ бензинлă автомобил двигателĕ пекех, унран вăл нимĕнпе те уйрăм мар темеле.

Газогенератăрлă автомобил питĕ усăлă. Виçĕ тоннăлă автомобил пĕр кубла метр вутăпа 300—350 километр, тоннă çурăлă автомобил 600—700 километр кайма пултараť. Чупас хăвăртлăх газогенератăрлă автомобилĕн те, бензинлă автомобилĕн те пĕрех. Газогенератăрлă автомобилĕн устройстви те питĕ çăмăл, ăна тытса пырас тата ăна пăхса усрас ĕçсем те йăвăр мар.

Газогенератăрлă автомобилсен кăçалхи августăн 30-мĕшĕнче Мускавра вĕçленнĕ Пĕтĕм Сойузри пысăк чупăвĕ малта пыракан совет техникине питĕ уççăн демонстрацилесе кăтартса пачĕ. Çул тата климăт тĕлĕшпе çав тери йăвăр условисенче 12 газогенератăрлă автомобилсене сăнаса пăхас ĕçсем икĕ уйăх хушши пынă. Вĕсем икĕ хутчен Уралăн çӳлĕ тăвĕсем урлă каçнă, вĕсем Казахстанăн тип хăйăрлăхĕсенчен, Украинăн вĕçĕ-хĕррисĕр çеçен хирĕсенчен тата Белоруççин вăрманĕсенчен ăнăçлăн иртнĕ.

Çак чупура, пит те пысăк йăвăрлăхсем нумай пулнă пулин те, советăн газогенератăрлă автомобилĕ питĕ лайăх резуљтатсем панă. Машинăсем 11 пин километра йахăн пĕр аварисĕр тата пĕр çĕмрĕк тумасăр иртнĕ. Чупу çакна кăтартса панă: совет инженерĕсем конструкциленĕ, хамăр çĕршыври материалтан хамăрăн рабочисен аллисем тунă газогенератăрлă автомобилсем йут çĕршывсенчи газогенератăрлă автомобилсенчен пĕрре те кайа йулмаççĕ. Вĕсемпе халăх хуçалăхĕн мĕн пур отрăçлисенче те ĕçлесе усă курма йураť.

Совет Сойуз транспăрчĕн малашнехи ӳсĕмĕнче газогенератăрлă автомобилсем питĕ пысăк вырăн йышăнмала.

Инженер Ф. П. Фомин.

Чăваш республикĕнчи промысла кооперацинчи çамрăк стахановецсен республикăри слљочĕ чĕнсе калани

Епĕр, çамрăк стахановецсем, ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă паллă кун умĕн пуçтарăнтăмăр. Коммуниссен болљшевикла партийĕ тăрăшнипе, совет çамрăкĕсен чи сывăх тусĕ, учителĕ аслă Сталин тăрăшнипе пирĕн телейлĕ çамрăклăх валљи пур условисене те тунă. Епĕр пурнăçра социалисăмлă тăван çĕршыв парса тăракан пур ырлăхсемпе те усă куратпăр.

Аслă Сталинла Конституци пире ĕçлев, вĕренӳ, кану прависем пачĕ.

Халăх тăшманĕсем, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсем пирĕн тулăх савăнăçлă пурнăça туртса илме хăтланчĕç. Анчах паттăр совет разведки пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, болљшевиксен партийĕ йертсе пынипе, троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсен контрреволљуцилĕ йăвисене вăйлăн çапса аркатрĕ.

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарни—вăл пĕтĕм халăх уйавĕ, ăна çамрăксем хăмăрăн тăван çĕршыва-аннене парнесем хатĕрленипе кĕтсе илеççĕ.

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа пыракан социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса, епĕр производствăра тата вĕренӳре çамрăк стахановецсем çав тери паха тĕслĕхсем панине куратпăр. Шупашкарти „Авторемонт“ ертелĕнчи стахановецсем: Дмитрий Леонтйев—производствă программине 300—350 процент, Кирил Кадодинцĕв—250 процент тултараççĕ, „Перламутр“ ертелти стахановкă Агафийа Шчербаковă—186 процент, „Красный мебельщик“ ертелти стахановец Йефим Паливцĕв—200—250 процент тултарса пыраççĕ. Йертсе пырас ĕçе лартнă çамрăк стахановецсем ертелсен руководствинче лайăх примерсем кăтартаççĕ. Акă, сăмахран, Грошĕв йулташ, Çĕнйал-Чурачăк ертел председателне лартнăскер, стахановла йухăма сарса йарса производствă программине тултарас йенĕпе малти вырăна тухрĕ. Йангилдинă ертелĕ (председателĕпе бригадирĕ те комсомолецсем) плана йаланах ăнăçлăн тултарса пынăшăн тата массăлă-политикăлă ĕçе лайăх организациленĕшĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ йалав илчĕ. Епĕр кашнийех ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле парнесем хатĕрлеме обйазателствăсем илнĕ.

Уйрăм стахановецсен çав тери паха тĕслĕхĕсем пур чухне епĕр стахановла йухăма пур çамрăксене йавăçтарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлетпĕр-ха, пирĕн пур ертелсем те производствă программисене тултараймаççĕ-ха, стахановецсемпе çамрăксем хушшинчи общеобразователљнăй тата техникăлă вĕренĕве те çителĕклĕ организацилемен.

Республикăри çамрăк стахановецсен слљочĕ çамрăксене пурне те ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа пуçарса йанă социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне хăпартас йенпе çĕнерен паха тĕслĕхсем кăтартма, производствă программине йаланах ăнăçлăн тултарса пыма, техникăна тата производствă процесне пĕтĕмпех алла çавăрса илме чĕнет. Пур çамрăксен умĕнче те, халăха кирлĕ таварсене ытларах парса тăрас задачă пулмала. ПСÇЛКС 20 çул тултарнă тĕле тăван çĕршыв-аннене тивĕçлĕ парне хатĕрленĕ май кашни çамрăк рабочин, работницăн — ударник пулмала. Ударниксен—стахановец пулмала. Епĕр пур ертелсен членĕсене, администрацине техникăлă работниксене пурне те ПСÇЛКС 20 çул тултарнă тĕле лайăх пахалăхлă продукци туса кăларса, хăйсен производствă программисене ăнăçлăн тултарма чĕнетпĕр.

Епĕр болљшевикла сисĕмлĕхе йаланах ӳстерсе пыма, халăх тăшманĕсене хирĕç татăклăн кĕрешме тата промысла коопераци системинче сăтарлăх йулашкийĕсене пĕтĕмпех, ним йулмиччен пĕтерме пулатпăр.

Çамрăк стахановецсен слљочĕ промкоопераци руководителĕсемпе специалисĕсенчен техникăлă вĕренĕве тĕплĕн йĕркелеме, çамрăк стахановецсен производствăлă канашлăвĕсене йĕркелĕ иртерме, стахановецсен опычĕсене ытти çамрăксем хушшине сарма, кулљтурăпа йăла ыйтăвĕсене лайăх организацилеме хушаť. Çамрăк кустарсене, уйрăмăнах çамрăк хĕрарăмсене йертсе пырас ĕçе ытларах, хăйулăрах лартмала.

Комсомол организацисен стахановецсемпе пĕтĕм çамрăксем хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе организацилемеле, çамрăк стахановецсене производствăран уйрăлмасăрах вăтам пĕлӳ илме пулăшмала, физкулљтурăпа оборонă ĕçне тĕпренех лайăхлатмала, кашни çамрăкăн, кашни хĕрачан кирек хăш минутра та хамăрăн чикĕсене сыхлама хатĕр пулмала, çавăнпа епĕр çамрăксене пурне те çар ĕçне вĕренме чĕнетпĕр. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ капиталисăмла йĕритаврăлăх çинчен кăтартса панине пирĕн нихăçан та манмала мар. „...Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх“ та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивчĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала“... (Сталин).

Чăваш республикĕнчи çамрăксем парти организацийĕ йертсе пынипе социалисăмлă ăмăртура мала тухмала. Ку пирĕн кашни çамрăкăн, кашни хĕрачан обйазанăçĕ пулса тăраť. Болљшевикла партия, халăхсен йуратнă çулпуçĕн Сталин йулташăн тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулас тесе пирĕн çав задачăна пурнăçламала.

Сывă пултăр ленинла-сталинла комсомол!

Сывă пултăр болљшевиксен аслă партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн учител тата тус, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

Промысла кооперацинчи çамрăк стахановецсен республикăри слљочĕ.

Пурнăça ирĕклĕн страхлассипе лайăхрах ĕçлемеле

ÇĔРПӲ. Пурнăça ирĕклĕн коллективлăн страхлакансен йышĕ ӳссех пыраť. Çĕрпӳ районĕнче 1938 çулти çенťабĕрĕн 1-мĕшне сарăмсăр амаввă тата вилнĕ çынсен çемйисене государствăран мĕн пурĕ 8.040 тенкĕ укçа парса пулăшнă.

Пурнăça ирĕклĕн (коллективлăн) страхланин усси çинчен лайăх ăнлантарса панă çĕрте, участокри страховой инспектăрсемпе агентсем, колхозсенчи страховой активсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче лайăх ĕçленĕ çĕрте, страховани ĕçĕ аван пыраť. Районри 1-мĕш участокри инспектăр Панин йул. ĕçлекен йалсенчи (Тӳçи, Лĕпсер, Тавăшкасси йалсовечĕсенче) ĕçлеме пултаракан колхозниксем пурте тенĕ пекех хăйсен пурнăçне ирĕклĕн страхланă. Çавăн пекех виççĕмĕшпе 6-мĕш участокри инспектăрсем малтанхи çурçуллăхра ирĕклĕн (коллективлă) страхлассин планне тултарнă. Çавăн пекех чылай предприйатисемпе учреждениесенче те страховани ĕçĕ лайăх пыраť. Страховкă укçине те вăхăтра тӳлесе тăраççĕ.

С. Ф. Чернов.

Рабочисемпе колхозниксен Октťабĕр умĕнхи ăмăртăвĕ

Пирĕн çĕршывра халăх уйавĕсене ĕçре чаплă çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илесси чыслă йăла вырăнне пулса тăчĕ. Халĕ те, Социалисăмлă Аслă Октťабĕр револљуци пулни çирĕмпĕр çул тултарас умĕн, савăтсемпе шахтăсенче, чукунçулпа шывçул транспăртĕнче, колхозсемпе совхоз уй-хирĕсенче плансене срукчен тултарма, ĕç нормисене ытлашшипех тултарма Октťабĕр умĕнхи социалисăмлă ăмăрту хумĕ çĕкленет.

Акă хăшпĕр тĕслĕхсем. Мускаври станоксем тăвакан „Красный пролетарий“ савăтра Октťабĕр умĕнхи ăмăрту çенťабĕрĕн 19-мĕшĕнче сборăчнăй цехри стахановецсем пуçарнипе пуçланнă. Çав кунах сборăчнăй цехра ĕçлекен рабочисем пысăк çитĕнӳ тунă: Федотйев слесăр нормăна икĕ хут ытла тултарнă, Чернов, Озеров, Гаврилкин сборщиксем хăйсен нормине пĕр хут çурă ытла тултарнă.

Донбасри Йежов йачĕпе тăракан шахтăра ĕçлекен рабочисем Октťабĕр умĕнхи ăмăртăва хутшăнса кăмрăк кăларас нормăна 2—3 хут ытла тултараççĕ. Нормăна çакăн пек ытлашши тултарса ĕçлекенсен хисепĕ шахтăра халљхи вăхăтра 150 çын патне çитнĕ.

Чукунçул транспăрчĕ çинче ăмăрту стахановла-кривоносла йухăм çуралса тухнă вырăнта—Кăнтăр-Донецк чукунçулĕ çинчи Славйанск депора ĕçлекен рабочисен коллективĕ пуçарнипе пуçланнă. Чукунçул çинчи пирвайхи стахановец—Петр Кривонос çуралса тухнă депора, хĕллехи ĕçсене паттăрăн хатĕрленеççĕ. Кун та пăравуссем лайăх. Колљцевик машинисăсемпе йăвăр пуйăссене илсе çӳрекен маçтăрсен хисепĕ пĕрмайах ӳсет. Славйанск деповĕнче ĕçлекен рабочисемпе служăщисем чукунçул транспăртĕнче ĕçлекен пĕтĕм работниксене ăмăртăва чĕнсе, хĕллехи ĕçсене пурйĕнчен те лайăххăн хатĕрлеме пулаççĕ. Кăнтăр-Донецк чукунçулĕ çинчи Иловайск деповĕнче, Хĕвеланăç чукунçулĕ çинчи Казатин деповĕнче т. ыт. çулсем çинче ĕçлекенсем славйанăвцăсем чĕнсе каланине йышăнса, государствăн турттару планне тултарма çеç мар, тата ытлашшипех тултарма пулаççĕ.

Шывçул транспăрчĕ çинче Октťабĕр умĕнхи ăмăртăва пуçарса йараканни—малти вырăнта тăракан „Степан Разин“ нефтевоз екипажĕ пулчĕ. Ăмăртăва хутшăнса „Микойан“ нефтевоз команди Астраханљтан Сталинграда 4 баржă нефť, талăкра 140 километр вырăнне 156 километр кайса, хăвăрт илсе çитернĕ. Каçпи тинĕсĕ çинчи „Агамали-оглы“ флагман-танкер стахановецсем социалисăмлă револљуци уйавĕ йачĕпе планран иртерсе 50 пин тоннă нефť турттарма пулнă.

Акă тата йалсенчен мĕн пĕлтереççĕ. Курск облаçĕнчи Суджан районĕнчи Кирăм йачĕпе тăракан колхоз членĕсем Октťабĕр умĕнхи ăмăртăва хутшăнса кĕрхине кĕске вăхăтра иртернĕ. Ку колхоз государствăна тырă тăратас плана тахçанах тултарнă, МТС-не натурплатă тырри парса татнă. Краснодар крайĕнчи Лиман МТС тракторисĕ Хамленко йулташ „ЧТЗ“ трактăрпа ĕçлесе пĕр сменăра 50 гектар вырăнне 70 гектар акнă.

Çакăн пек тĕслĕхсем çĕршерĕн, пиншерĕн илсе кăтартма пулаť.

Октťабĕр револљуци уйавĕ умĕн пĕтĕм çĕршыв ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине палăртаť. Çак уйав йачĕпе çамрăксем тăван çĕршыв-анне валљи пысăк парнесем хатĕрлеççĕ. Çамрăксем комсомол уйавне производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, çар техникине çĕнсе илнипе паллă тăваççĕ. Уйрăм предприйатисенче (Красноураљскинчи пăхăр савăчĕ, Сталиногорскри химкомбинат т. ыт.) çамрăксен пĕтĕм коллективĕ комсомол 20 çул тултарнă йатпа пыракан ăмăртăва хутшăнаççĕ. Фактсем—çамрăксем хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене тултарни çинчен калаççĕ. Çавăн пек, Донбасри Орджоникидзе йачĕпе тăракан шахтăра ĕçлекен комсомолецсем хăйсене уйрăм лавă организациленĕ, цикл планне 106 процент тултарса пыраççĕ.

Йăвăр промышлĕннăç халăх комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ çамрăксен пуçарăвне ырласа, савăт директăрĕсем, шахтăсемпе рудник пуçлăхĕсем, трестсемпе комбинат управљайушчийĕсем, тĕп управлени начаљникĕсем патне йатарласа çыру йанă. Унта вăл: „çамрăксем пуçласа йанă социалисăмлă ăмăртăвăн çĕнĕ йухăмĕн пуçне тăрасси, ăна йăвăр промышлĕннăçри стахановла йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ туса йарасси—йăвăр промышлĕннăçри предприйати руководителĕсен кирлĕрех те кирлĕ политикăлă ĕçĕ пулаť“ тесе кăтартаť.

Октťабĕрти Социалисăмлă Аслă револљуци пулни 21 çул тултарнипе ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа çĕкленнĕ социалисăмлă ăмăртăва хулара та, йалта та стахановла йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ туса йамала—çакăн пек тăраť задачă.

Пирĕн промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕ çак вăхăтра хĕрӳлĕ кунсене пурăнса иртереççĕ. Епĕр тăваттăмĕш квартăл умĕнче—ĕçе татса паракан уйăхсем умĕнче тăратпăр. Çак уйăхсем хушшинче пирĕн виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн пирвайхи çулĕнчи плансене пĕтĕмпех тултармала тăвас пулаť. Тăваттăмĕш квартăлта пирĕн сойузлă-республикăлă промышлĕннăçпа вырăнти промышлĕннăçăн продукцине иртнĕ çулхи тăваттăмĕш квартăлта кăларнинчен 21 процент ытларах кăлармала. Çак уйăхсенче пирĕн металлсем шăратассине, çĕрмамăк, нефť кăларассине, хими продукчисем тăвассине, станоксем, машинсем, куллен кирлĕ таварсем кăларассине нумайлатмала. Промышлĕннăçăн çак отрăçлисем кайа йулса пынине пĕтермеле. Çăмăл промышлĕннăçпа вăрман промышлĕннăçне малти вырăна кăлармала. Умра пысăк ĕçсем тăраççĕ.

Уйрăмах предприйатисенче хĕллехи вăхăтри ĕçе хатĕрлесси пысăк вырăнта тăраť. Хĕллене хатĕрленесси вăл чукунçул транспăртне кăна мар, пĕтĕм халăх хуçалăхне тивет. Тимĕр-тăмăр савăчĕсем, електростанцисем, ытти предприйатисем валљи хутмалисем, чĕр таварсем хатĕрлемеле.

Октťабĕр умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва вăйлатса йалта та пысăк ĕçсем туса çитермеле пулаť..

Промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕнче малта пыракансен çитĕнĕвĕ çакна кăтартаť: стахановла меслетсемпе ĕçлени—пире çĕнĕ çула производствăлă пысăк çитĕнӳсемпе çитме май параť, 1939 çулта пирĕн тата лайăхрах ĕçлемеле тăвас пулаť.

Халљхи вăхăтри кирлĕрен те кирлĕ ĕç вăл—Октťабĕр умĕнхи ăмăртăва рабочисен, колхозниксен, специалиссен, служăщисен пысăк массине хутшăнтарасси пулаť. Ку ĕçре çухарашу, вырăнсăр шав, уйрăм рекордсем хыççăн кайни пулмала мар. Массăлă стахановла йухăма вăйлатса пымала.

Октťабĕр револљуцийĕ пулни 21 çул тултарнипе комсомол 20 çул тултарнă йатпа пуçланса кайнă ăмăрту, Донбасри çĕркăмрăк комбиначĕсен ăмăртăвĕ, наркоматсен куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавĕсемшĕн пыракан ăмăртусем, çăмăл промышлĕннăç работникĕсен ăмăртăвĕ (вăл ăмăрту „хапрăк маркин чыслăхĕшĕн“ текен девизпа иртет)—çаксем пурте вĕсем пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хушшинче тăвăллă пысăк çĕкленӳ тапранни çинчен калаççĕ. Пирĕн ĕççыннисем, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ йертсе пынипе, хамăр çĕршывăн вăйхăватне тата ытларах тĕреклетесшĕн.

Çак çĕкленӳ куллен-кун хăпарса пыраť. Пирĕн парти, хуçалăх, профсойуз, комсомол организацисен хăйсен вырăнĕсенче пулăшмала—рабочисемпе колхозниксен Октťабĕр умĕнхи ăмăртăвĕн пуçне тăрса, çак ăмăртăва социалисăм строитĕлствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвас çулпа илсе пымала.

(„Правда“ умстатйинчен, 1938 çулти çенťабĕрĕн 26-мĕш).

Стройкăра стахановецсен йышĕ ӳсет

Правитĕлствă кăтартса панă тăрăх, Шупашкарти Горкомхозăн 24 хватерлĕ çурта 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле.

Ĕçе срукра тата ăнăçлă туса пырас тесен кашни кун строитĕлствăра платниксем—15 çын, квалификацилĕ мар рабочисем—50 çын ĕçлемеле. Анчах паянхи куна ĕç вăйĕ çителĕксĕрри чăрмантарса тăраť, халĕ строитĕлствăра платниксем 2, квалификацилĕ мар рабочисем 22 çын çеç ĕçлеççĕ.

Йулашки вăхăтра бригадăлă учотран индивидуаллă учот çине куçнă май, стахановла йухăм чылайах малала кайни сисĕнет. Кусăв, Йемелйанăв, Григорйевă, Федăрăвă, Ушаков, Тиманăвă йулташсем стахановецсен ретне куçрĕç. Акă В. Йемелйанăвпа Кусăв йулташсем кашни кун нормăна 215 процент тултараççĕ. Казачковпа Таймутăв платниксем те стахановла ĕçлесе йаланах плана ытлашшипе тултарса пыраççĕ.

Çапах та халљхи вăхăтра строитĕлствă планĕ ăнăçлăн пулса пыраймасť, ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Стройтрестăн рабочисем çителĕклĕ тупса памала.

Строитĕлствă прорабĕ

А. Балинăв.

Йерошкин йулташ сăмахĕ

(ЙУЛАШКИ)

нумайĕшĕ астăваççĕ те. Ĕлĕк чăваша çын вырăнне хуман, ăна мăшкăласа „инородцăсем“ тесе чĕннĕ. Ĕлĕк, 1917 çулти Октябĕр революцичченех, Шупашкар хули мĕнле пулнă-ха? Вăл пĕчĕк, таса мар, çӳп-çапсемпе вараланнă, культурăсăр хула пулнă. Ĕççыннисене вăхăта культурăлăн ирттерме, канма вырăн та пулман. Ĕç хыççăн вăхăта ирттермели пĕртен пĕр майĕ вăл — укçалла, картла выляни тата хупахсенче ĕçсе ӳсĕрĕлни пулнă. Шкулсемпе пульницăсем тăвас вырăнне патша правительстви пĕр Шупашкар хулинче кăна 14 ытла чиркӳсемпе мăнастырсем тунă, вĕсем халăха улталама кирлĕ пулнă. Хулана купцасем — харампыр йефремăвсем, хлебникăвсем т. ыт. хăйсен аллинче тытса тăнă.

Нумай хĕн-хур тӳснĕ чăваш халăхĕ Октябĕрти Социализмлă Аслă революци пулсан çеç ирĕклĕх илсе тулли кăкăрпа сывлама пуçларĕ. Большевиксен паттăр партийĕ йертсе пынипе кăна хăйĕн çĕрĕн, хăйĕн пуянлăхĕсен тулли правалă хуçи пулса тăчĕ. Марксизм-ленинизм йалавĕпе, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, Ленин—Сталин парти йертсе пынипе чăваш халăхĕ калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ, социализм строительствин мĕнпур фрончĕсенче халиччен курман çĕнтерӳсем турĕ.

Пайанхи кун епĕр ирĕклĕ, телейлĕ, савăнăçлă тата культурăлă пурнăçпа пурăнатпăр. Пайанхи кун тĕлне Шупашкар хулинче 4 аслă шкул, 7 вăтам шкул, 2 училишчă, рабфаксем, кинотеатр, поликлиникă, куç лечебници т. ыт. пур. Пысăк савăтсем тăваççĕ.

Партипе совет правительстви пулăшса пынипе, аслă Сталин кунсерен тăрăшнипе чăваш çĕршывĕ чечекленекен, орденлă республика пулса тăчĕ. Акă мĕншĕн епĕр, чăваш халăхĕ, хамăр çĕршыва, хамăрăн партине, Ленин—Сталин партине йурататпăр (алă çупаççĕ), епĕр хамăрăн аттене, учителе тата çулпуçне Сталин йулташа йурататпăр (алă çупаççĕ).

Фашизм тарçисем — йут çĕршыв разведкисен агенчĕсем, шпионсен, диверсантсен, сутăнчăк троцкисла-бухаринла, буржуалла-националисла банди телейлĕ чăваш халăхĕ çĕнтерӳлĕн малала пынине тытса чарма хăтланнă. Тăван çĕршыва сутакансен ĕçĕ тухмарĕ. Пирĕн парти, мухтавлă сталинĕç Йежов йулташ йертсе пыракан Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларчĕç, вĕсене çĕмĕрсе тăкса пĕтерсе хучĕç (алă çупаççĕ).

Делегат йулташсем! Пирĕн предприйатисенче сăтăрлăх йулашкисене халь те йапăх пĕтерсе пыраççĕ-ха, хапрăксемпе савăтсем пурте мар промфинплана тултараççĕ, стахановла йухăм çителĕксĕр саралнă, нумайĕш предприйатисенче продукци пахалăхĕ халĕ те лайăхах мар. Епĕр, хулари предприйатисенчи рабочисем, çав çитменлĕхсене большевикла пĕтерсе пыма сăмах паратпăр. Сталин йулташ капитализмлă йĕри-тавралăх çинчен кăтартса панисене епĕр йаланах асра тытатпăр, пирĕн тăван çĕршывăн оборона пултарулăхне тĕреклетсе пыма, стахановла ĕçлеме, тавар туса кăларма ларакан хака йӳнетессишĕн тата продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешме пулатпăр. Мана рабочисем конференци делегачĕсене çакăн çинчен калама хушрĕç: Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, пĕтĕм тĕнчипе коммунизм туса çитерессишĕн хамăрăн пĕтĕм вăйсене, хамăрăн пĕтĕм пĕлĕве, хамăрăн мĕн пур опыта парăпăр (алă çупаççĕ).

Йулташсем! Епĕр çакна шантаратпăр: Чăваш республикĕнчи большевиксен облаçри XIX-мĕш конференцийĕ хăйĕн ĕçĕнче, хăйĕн решенийĕсенче социализм строительстви тăрăх, сăтăрлăх йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе, халăх тăшманĕсемпе вĕсене пулăшакансене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе малашне те ĕçсем туса ирттерме палăртĕ. Епĕр, рабочисем — конференци йышăннă решенисене ĕçре пурнăçа кĕртме хатĕр, тесе пĕлтеретпĕр. Епĕр пирĕн партин, Тĕпкомăн тата аслă Сталинăн кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр! (Алă çупаççĕ).

Çĕнĕ çĕнтерӳсем патне — малала, йулташсем!

Сыва пултăр большевиксен коммунисла паттăр партийĕ тата унăн сталинла Тĕпкомĕ!

Пирĕн тăван йуратнă атте, тĕнчери пролетариатăн учителĕпе çулпуçĕ, аслă Сталин сыва пултăр! (Алă çупаççĕ. „Интернационал“).

ТӲРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн ĕнерхи номерĕнче, тиражăн пĕр пайĕнче, çакăн пек йанăшсем кайнă:

Умстатйари 7-мĕш абзац вĕçне çапла вуламала: „Çакă вăл... чи малтан, Обком руководствинче икĕ питлĕ çынсем ларнинчен, унта политикăла тимсĕрлĕхпе, идиотла чирпе чирленĕ çынсем пулниччен килсе тухнă“.

Конференцин çентябĕрĕн 25-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕ çинчен çырнă дневникре Смирнов йулташа ПАРТКОЛЛЕГИРЕН тесе каланă, ăна ПАРТКУРСРАН тесе тӳрлетмеле.

„Сталинград“ пăрахут польарлă рейсне вĕçленĕ

АРХАНГĔЛСК, çентябĕрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Пайан кăнтăрла, польарлă шывсенче 56 талăк ишнĕ хыççăн, „Сталинград“ пăрахут таврăннă. Вăл — Карски тинĕсĕн, Лаптевсен тинĕсĕн утравĕсемпе çыранĕсенчи зимовкăсенче пулнă. „Сталинград“ пăрахут капитанĕ Мелехăв йулташ ТАСС корреспонденчĕне çапла каланă:

— Пăрлă тата матеорологилĕ условисем пирĕншĕн пĕтĕм çул тăрăшшĕпех питĕ те лайăх пулчĕç. Рейсĕн пĕрремĕш çурринче çеç, пăрахут Русский утравĕнчен Провчишчевайа бухта патне кайнă чухне, епĕр „Ермак“ пăрçĕмрен пулăшĕвĕпе усă курнă. Тикси бухти патĕнчен кайалла çула пăрахут хăй тĕллĕн, пĕччен кайнă. Архангĕлска пăрахут 280 пассажир илсе килнĕ. Вĕсем хушшинче Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленин польар лешйĕнчи театрта ĕçлевĕ 27 артист.

„Родина“ самольот çинчен пĕлтерни

Çентябĕрĕн 26-мĕшĕнче „Родина“ самольот ăçтине тупса палăртайман. Халĕ ăна самольотсемпе тата çĕр çинчен те шыраççĕ.

(ТАСС).

Мускавра профсойуз активĕн пухăвĕ пулнă

Çентябĕрĕн 26-мĕшĕнче Мускавра профсойуз активĕн пухăвĕ пуçланнă. Ăна — Профсойузсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕ тата ПСК(б)П Мускав хула комитечĕ пуçтарнă. Пухура — икĕ пин çын ытла.

Профсойузсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн VII-мĕш Пленумĕн решенийĕсем çинчен Профсойузсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн секретарĕ Н. М. Шверник йулташ пысăк доклад туса панă.

Актив пухăвĕн ĕçĕсене — ПСК(б)П Мускав комитечĕн тата Мускав хула комитечĕн секретарĕ А. И. Угарăв йулташ, ПСК(б)П Мускав хула комитечĕн секретарĕсем — Братановский тата Пронин йулташсем, Профсойузсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн секретарĕсем — Москатăв тата Бреглич йулташсем хутшăннă.

(ТАСС).

ЙЕВРОПĂРИ ХĂРУШĂ ЛАРУ-ТĂРУ

Англипе Франци планĕ

Лондăнран пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Франци Чехословаки ыйтуне татса парас тĕлĕшпе хатĕрленĕ план çакнашкал (ку плана Чемберлен Гитлĕре тăратнă):

1. Нимĕçсем 50 процент ытларах пурăнакан районсене, халăхран ыйтмасăрах, Германине памала;

2. Çак районсенче пурăнакан нимĕçсемпе Чехословаки çыннисене паллă вăхăт хушшинче, гражданствă суйласа йышăнма ирĕк памала.

3. Чехословаки правительстви, Англипе Франци планне йышăнат пулсан, малашнехи вăхăтра хăйне никам та тивме ан пултартăр тесе, гаранти ыйтма пултарат.

4. Чехословаки правительствине малашнехи вăхăтра вăрçăпа тапăнасран хӳтлес тĕлĕшпе государствăсем паракан гаранти, Чехословаки правительстви вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕрне пулăшас тĕлĕшпе ку таранччен тунă договăрсем вырăнне пулмала.

5. Англи правительстви Чехословаки государствин çĕнĕ чиккисене агреççирен хӳтлес тĕлĕшпе гаранти пама хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ. (ТАСС).

Гитлĕр меморандумĕ

Англири хаçатсем çинче Гитлĕр Чемберлен урлă Чехословаки правительствине тăратнă меморандума пичетлесе кăларнă. Ку меморандумра Гитлĕр, — Англипе Франци Чехословакине пайласа пĕтерме йышăннă плана пула тата ытларах çунатланса кайнăскер, — Чемберленпа пирвайхи хут тĕл пулса каласнă чухнехинчен те ытларах пысăк требованисем кăларса тăратат.

Гитлĕр октябĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чехословаки территоринчен чылай пайне Германи çумне сыпăçтарма, вăл территорине Чехословаки çарĕсенчен, полицирен, жандармерирен, чикĕри хуралсенчен тасатма ыйтат.

Гитлĕр тата çак территорире пур пек пĕтĕм транспарта, çар, промышлĕннăç т. ыт. сооруженисене — аеродромсене, радиостанцисене, пăравусемпе вакунсене Германине пама ыйтат. Çавăн пекех апатçимĕçсене, выльăхсене, тĕрлĕрен чĕртаварсене те Германине памала.

Малала меморандум Чехословакин ытти районĕсенче те (нимĕçсем хутăш пурăнакан вырăнсенче), вăл районсене хăш государствăна кĕртмеле тăвас пирки плебисцит (пĕтĕм халăхран ыйтса тухасси) ирттерме ыйтат.

Гитлĕр ыйтакан территорисене Германи çумне сыпăçтармала тунă вăл, Чехословакине чикĕ хĕрринчи вырăнсенче нимĕнсĕр тăратса хăварни, промышлĕннăç центрĕсене, çирĕплетнĕ районсене пĕтĕмпех Германи аллине памала тунине пĕлтерет.

Меморандум тата арĕслене генлейнăвцăсене халех ирĕке кăларма ыйтат. (ТАСС).

Йугославипе Румыни позицийĕ

Йугослави правительстви Чехословаки правительствине çапла пĕлтернĕ: Чехословакипе тунă договăрти условисене Йугослави пурне те пурнăçа кĕртĕ, — тенĕ.

Бухарестран пелтернĕ тăрăх, Румыни правительстви те çаплах тăват.

* * *

Йугославипе Чехословаки хушшинче оборона союзĕ çинчен тунă договăрăн пĕрремĕш статйин çакăн çинчен калат: договăр тунă çĕршывсенчен пĕрин çине Венгри ним провокацисем тумасăрах тапăнас-мĕн пулсан, тепĕр çĕршывĕ çав тапăннă çĕршыва хӳтлĕме сăмах парат. Румынипе Чехословаки хушшинче тунă союзлă договăрăн пĕрремĕш статйин содержанийĕ те çавăн пекех.

(ТАСС).

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Чехословакине майлă тăраççĕ

Фашисла Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленни Америкăри общественнăçе пит хытă тарăхтарса йанă. Хальхи вăхăтра пĕтĕм Америкă тăрăх пулса иртекен нумай çынлă митингсенче, тĕрлĕрен общĕствăлă организацисен пухăвĕсенче, хаçатсенче Америкă халăхĕ: — Алăрсене Чехословаки çинчен сирĕр! — тесе ыйтни вăйлăран та вăйлă йанăрат.

Чехословакине Германи агреççинчен хӳтĕлес майпа çентябĕрĕн 25-мĕшĕнче Ньйу-Йоркра пулнă митинга 22 пин çын пуçтараннă. Вунă пин çын ытла залăна кĕрейменнипирки оратăрсен выступленийĕсене вĕсем радиопа итленĕ.

Митингра пĕр кăмăлпа резольуци йышăннă. Унра — Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правительствинчен — Германи хăйĕн вăрă-хурахла политикине малала та пурнăçа кĕртсе пырсан, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсемпе Германи хушшинчи мĕнпур çыхăнусене те пĕтерме ыйтнă.

Çавăн пек протес митингĕсем Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи ытти 30 хулара та пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Рузвельт Гитлĕр тата Бенеш патне телеграммă йанă

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен президенчĕ Гитлĕр патне тата Чехословаки республикĕн президенчĕ Бенеш патне телеграммă йанă. Вăл телеграммăра Рузвельт Чехословаки тĕлĕшпе пулса тăнă кризиса мирлĕ майпа татма чĕнсе каланă. Çавăн пекех Рузвельт Англипе Франци правительствисем патне те телеграммă йанă. „Çав тавлашусене мирлĕ майпа татса парас çĕрте хăт кирек мĕнле хирĕçӳсемпе тавлашусем тата кирек мĕнле йăвăрлăхсем пур пулсан та, — тесе çырнă Рузвельт, — епĕ шансах тăратăп: ăс-тăнпа тĕрĕс татса парас вырăнне вăйпа татса памали проблемă çук“.

„Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче пурăнакан 130 мĕлйунла халăх йачĕпе, — тесе каланă телеграммă вĕçĕнче, — пĕтĕм етемлĕх интересĕсемшĕн тавлашулă ыйтусене мирлĕ майпа татса парассине шырама епĕ сире хыттăнах чĕнетĕп“.

(ТАСС).

Судет ыйтăвĕ хыççăн — „Швейцари ыйтăвĕ“

Швейцари чиккисем çывăхĕнчи Германи хулисенче плакатсем сыпăçтарса тухнă. Плакатсенче çапла çырнă: „Швейцарири икĕ мĕлйун çурă çынсем хăйсене ирĕке кăларассине кĕтсе тăраççĕ“ пулат. Çак гитлĕрла агитаци Швейцарире пĕтĕм халăхсене тарăхтарат. Швейцари влаçĕсем Швейцари чиккисене тĕплĕн хӳтлес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене тума йышăннă. Чикĕ тăрăхĕнчи мĕнпур пунктсенче те çар чаçĕсене тăратса тухнă.

(ТАСС).

Польшă фашисĕсем провакацилĕ майсемпе çĕнĕрен çапăçусем кăларса пыраççĕ

Польшăра фашисла отрйадсем тăваççĕ, вĕсене Чехословаки чикки патне ăсатаççĕ. Вăл отрйадсем провокацилĕ майсемпе Чехословакин чикĕри охранипе çапăçусем кăларса пыраççĕ. Коньск текен вырăнта (Тршинц çывăхĕнче) çентябĕрĕн 25-мĕшĕнче польаксемпе Чехословакин чикĕри чаçĕсем хушшинче тытăçу пулса иртнĕ. Чехословаки пограничникĕсем тăракан çурта польаксем гранатăсем пăрахнă тата пăшалсенчен пенĕ. Икĕ сехет хушши çапăçнă хыççăн польаксем кайала чакнă. Çавăн пек тытăçусем Тешински (Чехословаки) Силезири ытти вырăнсенче те пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Англипе Франци хушшинчи калаçусем çинчен пĕлтерни

ПАРИЖ, çентябĕрĕн 26-мĕш. Франципе Англи министрĕсен канашлăвĕ пайан кăнтăрла тĕлне хупăннă. Икĕ тĕрлĕ официалла пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Малтанхи пĕлтерӳре Англи премйер-министрĕ „пайан тепĕр хут Франци министрĕсемпе калаçнă“ тенĕ. „Премйер-министр Франци министрĕсем ыйранипе Гитлĕр патне çыру йама йышăннă. Хорас Вильсон пайан çак çырупа Лондăнран тухса кайнă“.

Тепĕр пĕлтерӳре: „пайан ирхине Франципе Англи министрĕсем хушшинче çĕнĕрен канашлу пулса иртнĕ. Канашлу вăхăтĕнче пур ыйтусем тăрăх та пĕтĕмпех килĕшсе татăлнă. Йатарласа чĕннĕ генерал Камелен Англи премйер-министрĕ патне пынă. Ун хыççăн Англи министрĕсемпе оборона ыйтăвĕсем тăрăх калаçнă“, тенĕ.

Гитлĕрпа Вильсон пĕр-пĕринпе курнăçасси çинчен

ЛОНДĂН, çентябĕрĕн 26-мĕш. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пайан 17 сехетре Гитлĕр Хорас Вильсона йышăнат. Вильсон Гитлĕр патне Чемберлен çырăвĕпе пырат. Гитлĕр Вильсонпа курнăçнă çĕрте Англин Берлинри посолĕ Гендерсон та пулмала тесе шутлаççĕ.

Вильсонпа Гитлĕр пĕр-пĕринпе курнăçни

ЛОНДĂН, çентябĕрĕн 26-мĕш. Пайан каçхине Хорас Вильсонпа Гитлĕр пĕр-пĕринпе курнăçнă. Вĕсем 55 минут хушши калаçнă. Калаçу вăхăтĕнче Англин Берлинри посолĕ Гендерсон пулнă. Германи йенчен Риббентроп тата государствăпа президент канцеларийĕн начальнике Мейсснер пулнă.

ЛОНДĂН, çентябĕрĕн 27-мĕш. Рейтер агентствин Берлинри корреспонденчĕ çапла пелтерет: Хорас Вильсон çентябĕрĕн 27-мĕшĕнче ирхине самольотпа вĕçсе Лондăна таврăнат, вăл Чемберлен çырăвне хирĕç ответ илсе пырат.

Даладйе Парижа таврăннă

ПАРИЖ, çентябĕрĕн 26-мĕш. Даладйепе Бонне тата вĕсемпе пĕрле пулнă çынсем пайан 16 сехет те 37 минутра, Англи министрĕсемпе канашланă хыççăн Лондăнран Парижа таврăннă.

Пулни-иртнисем

Çак кунсенче Новинск йалĕнче (Сентĕрвăрри р.) колхоз итемĕ çинче авăн çапнă чухне вут тухнă. Вутра 12 капан çапман тырă çунса кайнă.

Вут — авăн çапнă чухне двигатĕл вут-хĕмĕсем тырă капанĕсем çине вĕçсе ӳкнинчен тухнă. Ку ĕçре айăплисене çирĕп ответ тыттараççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Нефт илсе тăракан организацисене

ПĔЛСЕ ТĂМА

Главнефтесбытăн Чăваш кантурĕ Чăваш АСС Республикĕнчи мĕн пур Халăх Комиссариачĕсенчен, учреждениĕсенчен тата организацисенчен Главнефтесбыт панă контрольнăй цыфрăсен формипе 1939 çулта мĕн чухлĕ нефт кирли çинчен зайавкăсем тăратма ыйтат.

Халăх Комиссариачĕсен, центрти учреждениĕсен тата организацисен формăсене, таблицăсене тата контрольнăй цыфрăсене тумали кăтартусене Главнефтесбытăн Чăваш кантурĕнчен, районри учреждениĕсемпе организацисен хăйсене нефт илме çирĕплетнĕ нефтбазăсенчен илмеле.

ЗАЙАВКĂСЕНЕ: районри учреждениĕсемпе организацисем хăйсен нефтбазисене, Халăх Комиссариачĕсем тата центрти ытти учреждениĕсем сводкăлă формăпа Главнефтесбытăн Чăваш кантурне 1938 çулхи октябĕрĕн 1-мĕшĕнчен кайа мар çак адреспа тăратаççĕ. Г. Чебоксары, Чапаевский поселок, Пушкинская ул., д. № 23, Чувашской конторе Главнефтесбыта.

Главнефтесбытăн Чăваш республикĕнчи кантурĕ.

2—2

ССР Союзĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Гидроузелĕн Шупашкарти Инженерлă-Геологилĕ партийĕ

КОЛЛЕКТĂРСЕМ-ГЕОЛĂГСЕМ ХАТĔРЛЕКЕН

ВИÇĔ УЙĂХЛĂХ КУРСА

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Курса 18 çулхисене тата аслăраххисене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Курса вĕренме илнисене уйăхне вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă тăрăх 125 тенкĕрен пуçласа 200 тенкĕ таран стипенди параççĕ.

Зайавленийе тата вĕренни çинчен, сывлăх мĕнли çинчен документсене çак адреспе йамала:

Г. Чебоксары, ул. Кадыкова, дом № 6-2, телефон 7—47 тата 7—44.

3—3

Чăвашсойузăн тĕп кантурне Шупашкарта ĕçлеме

аслă бухгалтĕр, икĕ бухгалтĕр тата машинисткă кирлĕ

Ĕç вăхăтĕнче çак адреспе мăтса пĕлмеле: г. Чебоксары, Театральная улица, дом № 7.

ЧĂВАШСОЙУЗ.

6—2

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ

фельдшĕрсен квалификацийе ӳстермели

ÇУЛТАЛĂКЛĂХ КУРС ОРГАНИЗАЦИЛЕТ

ЗАНЬАТИСЕМ

1938 çулхи октябĕрĕн 25-мĕшĕнчен пуçланаççĕ

Курса медицинăлă вăтам вĕренӳ çуккисене медицинă ĕçĕнче 5 çултан кайа мар ĕçленисене илеççĕ. Курса кĕрес текенсем 7—8 çуларан кайа мар вĕренни пулмала.

Курсантсене районри сывлăха сыхлав пайĕсем панă командировкăсем тăрăх илеççĕ. Командировкă илнисен ĕç укçи сыхланат тата уйăхне хватер укçипе пĕрле 100 тенкĕ стипенди параççĕ.

Документсене Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн медицинăлă вĕренӳ пайне йамала.

3—2

ССРС ФИНАНС ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН

ПĔТĔМ СОЙУЗРИ ЗАОЧНĂ ВĔРЕНМЕЛИ

ФИНАНСПА ЕКОНОМИКĂ ИНСТИТУЧĔ

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Институтран вĕренсе тухса государствă екзамĕнĕсене панисем диплом тата стационарлă финанспа економикă институчĕсенчен тухнисен мĕнпур прависене илеççĕ.

Институтра тӳлевсĕрех вĕрентеççĕ. Тăватă çул çурă вĕренмеле.

Института 17 çултан иртнисене, вăтам шкулран, техникумран тата рабфакран вĕренсе тухнисене тата екстерн йĕркипе вăтам шкулран вĕренсе тухни çинчен аттестат илнисене илеççĕ.

Института кĕрекенсем аслă шкулсене кĕмелли йĕркесемпе килĕшӳллĕн испытани тытаççĕ.

Института кĕме ыйтса зайавленисене институт директăрĕ йачĕпе çак адреспа йамала: „Москва, центр, улица Куйбышева, 9, йе Казанский учебно-консультационный пункт, ул. К. Маркса, 43, 4-й этаж, комната № 61, К. Ф. Э. И. им. В. В. Куйбышева. Кунтах проспект, зайавлени формине тата ытти справкăсене те илме пулат.

3—3

ЧĂВАШ АССР СЫВЛĂХА СЫХЛАВ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ

ХУЛ КАСАКАНСЕН 3 УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ

организацилет.

Заньатисем 1938 çулхи октябĕрĕн 10-мĕшĕнчен пуçланаççĕ.

Курса 4 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курсантсене уйăхне хватер укçипе пĕрле 90 тенкĕ стипенди параççĕ.

Зайавленине Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн медицинăлă вĕренӳ пайне памала.

3—2

Туллимар вăтам шкулсен учителĕсене хатĕрлекен вунă уйăхлăх курсра — вырăс, чăваш, йут çĕршыв чĕлхисем тата литературă уйрăмĕсем тăрăх заньатисем 1938 çулхи октябĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Сутăç Халăх Комиссариачĕ.

2—1

„Чăваш Коммунĕ“ ... Подписка ...

Главлитăн уполномоченнăйĕ Чувашгавлита № 508 Гор. Чебоксары, типографи № 1 заказ № 711, ...